24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 МАРТ 1 ВЫРСАРНИКУН 51(6076) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔН, ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Сталинла ăру, çĕнтерӳ патне—малалла!

Совет халăхĕ нимĕçсен фашистла бандисене хирĕç отечественнăй аслă вăрçă туса пынă хаяр кунсенче совет çамрăкĕсем тата вĕсен малта пыракан отрячĕ—Ленинла—Сталинла комсомол—хăйĕн шухăш-кăмăл çирĕплĕхне нихăçанхи пек мар уççăн кăтартса пачĕ.

Комсомолăн ĕçпе тата кĕрешӳпе çуммăнласа тăракан историйĕ большевикла партин историйĕпе таччăн çыхăннă. Большевикла парти ертсе пынипе комсомол граждăн вăрçин фрончĕсенче çапăçнă, хуçалăха ура çине тăратассишĕн хĕрӳллĕн ĕçленĕ, Сталинла пятилеткăсен аслă сооруженийĕсене тăвассишĕн кĕрешнĕ. Халĕ те, тăван çĕршыв кунçулĕ пирки çапăçу хирĕнче ыйту татас кунсенче, мухтавлă комсомол—Ленинăн—Сталинăн ывăлĕ—татах чи малти ретре, чи ответлă та хăрушă участоксенче кĕрешет. Комсомолăн Мускав организацийĕнчен фронта мĕнпур комсомолецсенчен çуррине яхăн кайнă. Ленинград организацийĕнчи калинпилĕк комсомолецран тăваттăшĕ хăйсен тăван хулине хӳтĕлеççĕ. Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне панă приказри сăмахсем Хĕрлĕ Çарти, фронтри комсомола тăван çĕршыв мухтавĕпе чапĕшĕн паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума хавхалантараççĕ.

Пирĕн куç умне пирĕн вăхăтри çамрăк çыннăн геройла сăнарĕ, хамăрăн çĕршыв чыслăхĕпе ирĕклĕхне, унăн никама пăхăнманлăхне паттăррăн та нимĕнрен хăрама пĕлмесĕр хӳтĕлекен çыннăн сăнарĕ, хăйĕн мĕнпур вăй-хăвачĕпе тата илемĕпе туxса тăрать. Уншăн халăх интересĕсем—нимĕнрен те пахарах. Сталинăн лозунгĕсем пирĕн çамрăксене Гитлерăн çаратуçăсене хирĕç геройла кĕрешме чĕнсе хавхалантараççĕ. Большевикла партие чун-чĕререн парăнса тăни, пирĕн ĕç тĕрĕс ĕç пулнине тарăннăн ăнланни, тăшмана пуçĕпех çапса аркатассине, çакă темĕн пек йывăр пулсассăн та, çакăншăн тĕмĕнле йывăрлăхсем тӳсмелле пулсассăн та, çирĕппĕн шанса, ĕненсе тăни,—çакă пулса тăрать ĕнтĕ пирĕн çамрăк çарăн вăй-хăвачĕпе паттăрлăхĕн, геройлăхĕн çăлкуçĕ.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсене хирĕç кĕрешекен комсомолецсем тĕлĕнмелле паттăрла ĕçсем вĕçĕ-хĕрри çук, çав пек геройлăх халиччен нихăçан та пулман. Комсомол хушшинчен пайтах геройсем çуралса тухрĕç. Вĕсен ячĕсем совет халăхĕн кĕрешӳ летописĕнче ĕмĕрлĕхех çырăнса юлаççĕ, вĕсем пек пулма вĕсен примерĕсенчен миллионшар çамрăксем хĕрсем вĕренсе пырĕç. Дмитрий Овчаренко, Лиза Чайкина, Истрафуил Мамедов, Курбан-Дурды, Александр Чекалин, Зоя Космодемьянская, Николай Бочаров, Илья Кузин—çак геройсем Ленинла—Сталинла комсомолăн членĕсем мĕнле паттăр ĕçсем тума пултарнине кăтартса пачĕç.

Çавăн пек паттăрсем пирĕн вуншар пинĕн хисепленеççĕ. Кăнтăр—Хĕвеланăç фронтĕнче кăна вăрçă пуçланнăранпа 2.223 комсомолеца орденсемпе медальсем парса наградăланă. Шухăшласа пăхăр-ха çак цифрăсем çинчен, — кашни цифра хыçĕнче тĕлĕнмелле геройлăхпа паттăрлăх тăрать, çĕнтерӳшĕн вилĕмрен хăрамасăр кĕрешекен паттăрсем тăраççĕ.

Тылра юлнă комсомолецсем те çавăн пекех нумай тĕрлĕ патриотла паха ĕçсене пуçарса пыраççĕ. Двухсотниксен движенийĕ мĕнпур халăх движенийĕ пулса тăни; комсомолецсемпе çамрăксем пуçарса янă воскресниксене çамрăксем кăна мар, мĕнпур рабочисемпе колхозниксем, служащисем хутшăнни; комсомолецсем организацийĕнче фронтовой бригадăсем хăйсен планĕсене нумай хут ирттерсе тултарса пыни; танксемпе бронепоездсем, авиаэскадрильйăсем тунă çĕре укçа-тенкĕ пухни; хĕрсене производствăна явăçтарни; нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче хуçалăха юсаса йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлени; Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 24 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăртăва пуçарса яни; тракторсем валли запаслă детальсем пухни—комсомолĕн çакăн пек паха пуçарăвĕсемпе ĕçĕсем тăван çĕршыва хӳтĕлессишĕн тунă питех те пысăк ĕçсем пулаççĕ.

Комсомол, мĕнпур совет çамрăкĕсем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, фронтра тăшмана аркатмаллах пырса çапас тĕлĕшпе тăван Хĕрлĕ Çара пысăк пулăшу панă. Çавăн пек хăватлăн пырса çапнипе нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухатусем тӳсрĕç. Гитлер çарĕн тылĕ кунран-кун хавшаса пырать. Германин стратегиллĕ ресурсĕсем кунран кун пĕтсе пыраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем фашизм чуралантарнă Европăри халăхсене гитлерла тирание хирĕç активлă кĕрешĕве çĕкленме хавхалантараççĕ.

Фашистсен вăрçă машинни мăшлатăрса, хавшаса кайнă,—ăна пĕтĕмĕшпех çĕмĕрмелле. Çакă вăл халăхăн мĕнпур вăй-хăвачĕпе средствисене мобилизацилеме ыйтать. Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне панă приказ çине ответлесе, пĕтĕм совет халăхĕ социализмлă ăмăртăва çĕнĕ вăй-хăват кӳрсе чĕртсе ячĕ. Совет халăхĕ шурри те тӳссе ирттерме хатĕр, çĕнтерӳшĕн кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме хатĕр. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен паттăрсен пĕрремĕш ретĕнче, халиччен пекех, яланах Ленинла—Сталинла комсомол пулĕ.

Комсомолецсем! Танксем туса кăларассине, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсемпе тупăсем, минометсемпе снарядсем, минăсем, пулеметсем, автоматсемпе винтовкăсем туса кăларассине ытларах вăйлатăр! Фронта горючипе çусем ытларах парса тăрăр! Войскăсемпе çар грузĕсем тиенĕ транспортсене хăвăртрах çӳретĕр! Фронт валли ытларах продовольстви парăр!

Опыт çакна кăтартса парать: пирĕн ĕç тухăçлăхне малалла хăпартма, боевой продукци туса кăларассине вăйлăрах ӳстерме кирлĕ шалти резервсем питех те нумай-ха. Комсомол организацийĕсем пĕр уйăхран каярах срокрах тракторсем валли запаслă пайсемпе инструментсем 10 миллион тенкĕлĕх пухнă. Пирĕн халăх хуçалăхĕн кирек мĕнле участокĕнче те çакăн пек пуянлăхсем вĕçĕ-хĕррисĕр тупма пулать! Хамăрăн мĕнпур резервсене фронтшăн ĕçлеттересси, ĕç тухăçлăхне кунран кун ӳстерсе пырасси, хĕçпăшал, боеприпассем, продовольстви туса кăларассине малалла ӳстерсе пырасси—çакнашкал ĕнтĕ комсомол организацийĕсен **боевой тĕп** задачи.

Комсомол организацийĕсен государствăпа хуçалăх ĕçне хутшăнса ĕçлессине пур енĕпе те чĕртсе, активлантарса пымалла. Çакă вăл, пуринчен ытларах, партин пуçламĕш организацийĕсем çук çĕрти колхозсенчи комсомол организацийĕсене пырса тивет. ВКП(б) уставĕ çакна ыйтать: çавăн пек колхозсенче комсомол организацийĕсем партипе правительствăн директивисене пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕмĕшпех хăйсем ответлă пулса тăраççĕ. Çакă вĕсене ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене, чи малтан çураки кампанине, лайăх организацилесе ирттерес тĕлĕшпе чăнлăн вожаксем пулса тăма, хуçалăхри мĕнпур ĕçсене тимлĕн хутшăнса пыма, ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн, тырпул, аш-какай, пахча-çимĕçсем, чĕртаварсем ытларах туса парассишĕн кунлсен çине тăрса ĕçлеме хушать.

Çĕршыв Хĕрлĕ Çар валли боевой резервсем хатĕрлет, çакă пĕрремĕш вырăнта тăракан питех те паха ĕçе комсомолăн чи активлăн хутшăнса ĕçлемелле. Комсомолăн хăшпĕр организацийĕсенче—Свердловск, Горький, Хабаровск тата ытти организацисенче те комсомолецсемпе çамрăксенчен резерври формированисем тăвас тĕлĕшпе паха ĕç опычĕ пур. Сахал мар йĕлтĕрçĕсем, тăшман танкĕсене пĕтерекенсемпе стрелоксем, çакăн пек формированисенче вĕренсе хатĕрленсе, фронта тухса кайнă. Вĕсем тăван çĕршывшăн паттăррăн çапăçаççĕ.

Комсомол организацийĕсен чи пысăк çитменлĕхĕсенчен пĕри вăл — çамрăксем хушшинчи массăллă-политикăллă воспитани ĕçне япăх туса пыни пулать. Комсомол организацийĕсенче темиçе уйăхшарăн пухусем, пленумсем пулманни çинчен, калаçусемпе докладсем, вулавсем туса ирттерменни çинчен калакан фактсене час-часах тĕл пулма пулать.

Ленин пире комсомолăн кирек мĕнле ĕçре те хăйĕн пуçарулăхне, хăйĕн тавçăрулăхне кăтартакан ударлă группа пулмалла тесе вĕрентнĕ. Халĕ, хамăрăн мĕнпур вăйсене хурса кĕрешме тивнĕ самантра, Ленинăн çак кăтартăвĕ комсомолшăн татах та пысăк вырăн йышăнса тăрать. Комсомолăн кашни организацийĕ хăйĕн тавра çавăрăнса пăхтăр, — мĕн тери кирлĕ те паха, халех тумалли ĕçсем кĕтсе тăраççĕ комсомолецсене! Такам кăтартса парассине кĕтсе тămалла мар, кĕрешӳри практикăллă ĕçшĕн, ăна вĕçнех çитерессишĕн çине тăрсах кĕрешмелле, фронт валли, тăшмана çĕнтерес ĕç валли, хамăрăн халăхăн телейĕ валли кашни кун пĕчĕк ĕç те пулин туса пымалла.

Комсомол вăйĕн, унăн идейăлăхĕпе кĕрешӳри организованноçĕн çăлкуçĕ яланах большевикла парти ертсе пыни пулса тăнă. Пирĕн халăх умне тухса тăнă йывăр испытанисен кунĕсенче комсомол хăйне-хăй Сталинла боевой ăру пулнине, большевикла парти тавра, Сталин юлташ тавра нихăçанхи пек мар таччăн пĕтĕçсе тăнине кăтартса пачĕ. Çаканпа ĕнтĕ комсомол чи малтан большевикла партие тав тума тивĕçлĕ. Тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсен — комсомолăн ывăл-хĕрĕсен геройла кĕрешĕвне халăх ĕмĕр-ĕмĕрех манмĕ. Вĕсем хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр кĕрешни, вĕсем хамăрăн тăван халăха чĕререн парăнса тăни ĕмĕр-ĕмĕр вилĕмсĕр, чĕрĕ пулĕ. Аслă тăван çĕршывăн телейĕпе ирĕклĕхĕшĕн, унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн, гитлерла вăрă-хурахсене хăвăртрах çапса аркатассишĕн—малалла! Сталинла боевой ăру, Ленин—Сталин ялавĕпе — малалла, тăшмана хирĕç кĕрешме!

(«Правда», февралĕн 27-мĕшĕнчи умстатьяран).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 27-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противника хирĕç вăйлăн çапăçса, фронтăн тĕрлĕрен участокĕсенче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Противник техника енĕпе, уйрăмах çынсем енĕпе, пысăк çухатусем тӳсет.

Февралĕн 26-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 3 самолетне персе антарнă тата тăшманăн аэродромĕсем çинче 16 самолет пĕтерсе тăкнă. Пĕтĕмпе çав кун нимĕçсен 19 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Февралĕн 27-мĕшĕнче Мускав патĕнче сывлăшри çапăçусенче противникăн 3 самолетне персе антарнă тата пирĕн зенитнăй артиллери 3 самолет персе ӳкернĕ. Пĕтĕмпе çав кун Мускав патĕнче нимĕçсен 6 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Февралĕн 26-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 70 лавне яхăн, 11 орудине, зенитнăй пулеметсен 2 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, противник казарминĕ эскадрона çити тата пехотине батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Февраль уйăхĕн 20-мĕш числисенче фронтăн кăнтăр енчи участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен командованийĕ румынсемпе нимĕçсен çĕнĕ чаçĕсене резервран илсе вĕсене пирĕн войскăсене хирĕç контратакăна кĕртсе янă. Пирĕн войскăсем хăйсен тăлĕссĕне пухса йĕркелесе румынсемпе нимĕçсен наступлени тăвакан чаçĕсене флангран пырса çапнă та вĕсене сапаласа янă, вара румынсемпе нимĕçсен чаçĕсем нимĕн йĕркесĕр каялла чакма пуçланă. Çак çапăçусенче румынсен 1-мĕш пехотнăй дивизине пуçĕпех çапса аркатнă, нимĕçсен 113-мĕш пехотнăй дивизине йывăр поражени кӳнĕ. Противник çапăçу хирĕнче 7.500 яхăн вилĕ пăрахса хăварнă. Пирĕн войскăсем противникăн 30 оруди, 35 миномет, 638 винтовка, 10 пулемет, 36 автомашина, 70.000 патрон тата ытти çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Нимĕçсен 27 орудине тата 40 минометне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр чаçри боецсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, нимĕçсен оборонин Н. ятлă паха рубежне тытса илнĕ. Çапăçура пĕр оруди, 3 пулемет, 4 ещĕк мина, 200 снаряд, патронсем нумай тытса илнĕ тата противникăн чĕрĕ вăйне пысăк çухатусем кӳнĕ. Тепĕр участокра Иовлев юлташ командир пулса ертсе пыракан часть нимĕçсене 3 оруди, 4 пулемет тата минăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем, малалла куçса пырса, 2 кун хушшинче нимĕçсене тĕрлĕрен калибрлă 64 оруди, 24 пулемет, 7 миномет, винтовкăсемпе автоматсем нумай, 26.000 винтовка патронĕ, пин ытла ручной граната тата ытти тĕрлĕ çар снаряженийĕпе пурлăхĕсене нумай тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 700 виллине çити выртса юлнă.

* * *

Политрук Титаренко юлташ ертсе пыракан 15 çынран тăракан боецсен групписи (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) противникăн 200 çынран тăракан отрячĕпе хирĕç пулнă. Гитлеровецсем красноармеецсене çавăрса илме хăтланнă. Пирĕн боецсем нимĕçсене çывăха янă та вĕсем çине гранатăсем ывăтнă, унтан штыкпа атака тунă. 15 паттăр хăюллăн çапăçса 100 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕçсен 2-мĕш учебнăй ротинчен тыткăна лекнĕ фельдфебель Гюнтер Либельт çапла каласа панă: «Днепропетровскра нимĕçсен командованийĕ сывалса çитме пуçланă тата аманнă 800 салтака пухса, вĕсене Лозовая хулине ячĕ, унта çĕнĕ полк йĕркелемелле пулнă. Эпĕ те çав эшелона лекрĕм. Пирĕн Лозовая хулине çитме май килмерĕ, мĕншĕн тесен унта вырăссен войскисем пирĕнтен маларах пырса кĕме ĕлкĕрнĕ. Вара пирĕн умма малалла мĕн тăвасси çинчен ыйту тухса тăчĕ. Салтаксем пăлханма пуçларĕç. Нумайĕшсем саланса тарса пĕтрĕç, теприсем, çав шутрах эпĕ те, тыткăна парăнма шутларăмăр».

* * *

Румынсен 1-мĕш пехотнăй дивизийĕн 5-мĕш егерски полкĕн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Писат Семен çапла каласа панă: «Юлашки вăхăтра апат-çимĕç питĕ начарланчĕ. Çăкăр нормине ĕлĕкхин çуррине çеç хăварчĕç. Салтаксене çăкăр виçĕ кун нормине пĕр кунтах параççĕ те салтаксем ăна панă кунах çисе ярса кайран вара выçă пурăнаççĕ. Пирĕн ротăра хăйсене хăйсем юри суранлани 4 тĕслĕх пулчĕ. Нумаях та пулмасть пире полкран 80 салтак тарни çинчен калакан приказа вуласа пачĕç».

* * *

Курск облаçĕнчи Кривцово ялĕнчен тухса кайнă чух гитлерла бандитсем ялти 75 çурта вут тивертсе çунтарса янă, 60 колхозникĕ çаратнă тата вĕлернĕ.

* * *

Джалал-Абадск облаçĕнчи Сузакск, Ленинск тата Октябрьски районсенчи колхозниксем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа хаклă парнесем хатĕрленĕ. Вĕсем çар чаçне йĕнерлесех 70 лаша панă.

Февралĕн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 28-мĕш ырăн тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн артиллерин гвардейски чаçĕ, нимĕçсен çирĕплетнĕ пунктĕ çине кĕтмен çĕртен вут-çулăмпа тапăнса, тăшман миномечĕсен 2 батарейине, 5 ДЗОТ-не пĕтерсе тăкнă тата противник пехотине пĕр ротăна çити стройран кăларнă.

* * *

Пирĕн летчик-штурмовиксем нимĕçсен аэродромĕ çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Çав аэродром çинче нимĕçсен «Ю-52» тата «Ю-87» йышши 25 самолета çити ларнă пулнă. Совет летчикĕсем пырса тапăнса тăшманăн 16 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Гевриленко командирăн танк экипажĕ противник вырнаçнă çĕре пырса кĕнĕ те тупăсенчен персе тата гусеницăсемпе таптаса тăшманăн çĕрпе йывăçран тунă 6 огневой точкине çĕмĕрнĕ, 40 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче кĕçĕн лейтенант Коровко юлташ ертсе пыракан танк экипажĕ противник пулемечĕсен темиçе точкине путарса лартнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 30 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Курск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче Д. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ хăюллăн кĕрешет. Отряд командирĕн дневникĕнчи хăшпĕр вырăнсене илсе кăтартатпăр:

«Январĕн 13-мĕш. Партизансен групписи нимĕçсен разведки çине тапăнса 5 салтака тыткăна илчĕ.

Январĕн 18-мĕш. Засада туса нимĕçсен карательнăй отрячĕ çине тапăнтăмăр. Гитлеровецсем хăйсен салтакĕсен 18 виллине пăрахса хăварса тарчĕç. Эпир фашистсем колхозниксене çаратса пухнă пурлăх тиенĕ 4 лава тытса илтĕмĕр.

Январĕн 21-мĕш. Нимĕçсен продовольстви тиесе пыракан грузовой автомашинине сирпĕнтерсе ятăмăр. Нимĕç салтакĕсене нумай пĕтерсе тăкрăмăр. Фашистсем колхозниксенчен çаратса пухнă 134 центнер тырра тытса илтĕмĕр. Тытса илнĕ тырра халăха валеçсе патăмăр».

* * *

Нимĕçсен 223-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 334-мĕш полкĕн 3-мĕш батальонĕнчен тыткăна лекнĕ штабри унтерофицер Ганс Ленгендорф çапла каласа панă: «Икĕ эрне хушшинче кăна пирĕн батальонра 4 офицерпа 66 салтак вилчĕ. Çак вăхăт хушшинче аманнипе тата тăм илнипе 89 çын стройран тухнă. Нумаях та пулмасть дивизи штабĕн радисчĕ тарчĕ. Дивизине панă приказра тарнă радист вăрттăн документсем илсе кайнă, тесе çырнă. Çав приказа пире те вуласа пачĕç».

* * *

Нимĕçсен обер-ефрейторĕ Артур Франк Эльза Цандер патне Бохума çапла çыру çырнă: «Эпĕ питĕ хурлăхлă хыпар илтĕм. Çапăçу хирĕнче манăн иккĕмĕш пиччем те вилнĕ. Эпир, ку таранччен сывах юлнăскерсем, вăрçă пуçланнă чухнехи пек текех пурнăçа юратакан çамрăк çынсем мар. Яланах хăраса пурăнни, сывăх çынсемпе туссене çухатни — çаксем пурте пирĕнтен стариксем туса хучĕç».

* * *

Нимĕçсен 4-мĕш танковăй дивизийĕнчи санитари ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Георг Кемпфер çапла каласа панă: «Эпир Карачево ялне пырса кĕнĕ чух тахшин ку ялта партизансен семйисем пурăнаççĕ тесе каларĕ. Майор Шрайбер 15 çурта вут тивертсе çунтарса яма хушрĕ. Çунакан çуртсенчен хĕрарăмсем макăра-макăра чупса тухрĕç, ача-пăчасем юр çинче çара-уран чупса çӳрерĕç. Ку калама çук тискер те хăрушă картина пулса тăчĕ».

* * *

Германире çаратаканнисен тата хĕçпăшалпа тапăнса хурах пусаканнисен шучĕ питех те ӳсе кайнă. Нумай хуласенче судсем çавнашкал ĕçсем тунăшăн айăплачакансене суд туса пыма та ĕлкĕреймеççĕ. Час-часах продовольстви базисемпе продуктсем турттарса пыракан поездсем çине тапăнаççĕ. Пĕр Росток хулинче кăна февраль уйăхĕн вунă кунĕ хушшинче çавăн пек 72 ĕç пăхса тухнă. Айăпласа суд тунисем хушшинче СС дивизийĕнчи 11 салтак пулнă. Нимĕçсен «Гамбургер фремденблат» хаçачĕ февралĕн 21-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Росток хулинчи уйрăм судăн приговорĕ тăрăх иртнĕ кунсенче поездсен составителĕсене Август Меевскипе Август Река тавар поезчĕсене çаратнăшăн вĕлернĕ.

* * *

Кировобадри паровоз деповĕн коллективĕ (Азербайджан) паровозсем юсанă чухне тĕслĕ металсем вырăнне урăх материалсемпе анлăн усă курать. Ку депора халĕ 900 килограмм пăхăр перекотленĕ.

Çулпуç татах та вăйлăнрах ĕçлеме чĕнчĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр). Сталин юлташ приказне районри рабочисем, колхозниксем тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Нарком приказĕ ĕçсыннисене ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать. Рабочисем, стахановецсем Сталин юлташăн приказĕпе палланнă хыççăн фронта пулăшассине татах та ытларах вăйлатма пулаççĕ.

— Хĕрлĕ Çар нимĕç оккупанчĕсене хăватлăн çĕмĕрсе пырать. Пирĕн задача— тылра татах та тимлĕрех ĕçлесе ытларах продукци туса кăларасси. Çапла ĕçлеме чĕнет пире Сталин юлташ. Эпĕ халĕ кулленех нормăна 2 хут ытла тултарса ĕçлетĕп, малашне ĕç нормине 300-шер процент тултарса пыма сăмах паратăп,—тет комбинатăн 10-мĕш номерлĕ цехĕнчи стахановец Шабанов юлташ.

Стахановкăсем Раева, Казакова тата ытти юлташсем производствăра ĕçлеме тытăнни икĕ уйăха яхăн çеç. Февралĕн 15-мĕшпе 22-мĕш кунĕсем хушшинче вĕсем сменăри нормăна 230—255 процента çити тултарса ĕçлерĕç. Малашне вĕсем кулленхи ĕç нормине 300-шер процент тултарса пыма пулаççĕ.

Данилов юлташ ертсе пыракан бригадăри Карпов, Калинкина, Паймуков, Валандеев стахановецсем çак кунсенче уйрăмах хастарлăн ĕçлеççĕ. Карпов юлташ февралĕн 23-мĕшĕнче нормăна 480 процент тултарчĕ.

— Сталин юлташ пире Хĕрлĕ Çара татах та ытларах пулăшма, производствăра татах та вăйлăнрах ĕçлеме чĕнчĕ, эпир çак чĕнĕве ăнăçлăн пурнăçлăпăр,—тесçĕ стахановецсем.

Х. ЛИСИН.

Приказа сӳтсе-явнă хыççăн

ÇĔРПУ. (Телефонпа). Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ февралĕн 23-мĕшĕнче кăларнă приказа МТС-ри рабочисемпе служащисен пухăвĕнче сӳтсе-яврĕç. Сталин юлташ приказĕ çинчен политотдел начальникĕ Лукин юлташ доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн чылай рабочисем тухса калаçрĕç.

Пуху хыççăн МТС-ра ĕçлекен рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлма пуçларĕ. Бригадăпа бригада, уйрăм рабочисем пĕр-пĕринпе ăмăрту договорĕсем турĕç. Яковлев юлташăн бригади Крупов юлташ бригадине ăмăртăва чĕнчĕ. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлени ĕç тухăçлăхне палăрмаллах ӳстерме пулăшрĕ. Токарь Куликова юлташ токарнăй станокăн шкивне пĕчĕккĕрех шкивпа улăштарса станокăн ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерме май пурри çинчен сĕнӳ пачĕ. МТС дирекцийĕ Куликова юлташăн паха сĕнĕвне ырласа пурнăçа кĕртрĕ. Халĕ токарьсем ĕç тухăçлăхне 2 хут ӳстерсе пыраççĕ. МТС коллективĕ Хĕрлĕ Çара куллен пулăшса пырать. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем параççĕ, йĕлтĕрсем туянма 70 тенкĕ укçа пухса пачĕç.

Г. ПЕТРОВ.

Сталин юлташ приказĕ ĕç тухăçлăхне хăпартма хавхалантарать

КАНАШ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри вулавçăсемпе агитаторсем Сталин юлташ приказне пур цехсенче те, пур бригадăсенче те рабочисемпе работницăсене вуласа ăнлантарса панă. Аслă çулпуçăн приказне ăнлантарса панă хыççăн тухса калаçакансем хăйсен кĕске сăмахĕсенче тăван Хĕрлĕ Çара чĕререн юратнине, нимĕç оккупанчĕсене хаяррăн курайманнине тата çĕнтерӳ пирĕн алăра пулассине шаннине палăртрĕç.

Юратнă полководецăн Сталин юлташăн приказне ответлесе, рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстерме, ĕç пахалăхне лайăхлатма тата фронта пулăшас ĕçе вăйлатса пыма тупа турĕç.

Корнет юлташ ертсе пыракан цехри Бельский юлташ сменăри задание 200 процент тултарса ĕçлеме обязательство илчĕ. Февралĕн 26-мĕшĕнче вăл ĕç вăхăчĕпе тĕрĕс усă курса тата хăй тăрăшса ĕçлесе сменăри задание 400 процент тултарнă.

Фрезеровщик Гурьянов, разметчик Керекеза, молотобоец Лашманов, ĕç фронтĕнчи отличник тимĕрçĕ Дюжев юлташсем Сталин юлташ приказĕ çине ответлесе кулленех 3—4-шар норма тултарса пыраççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Фронтри боецсем валли ăшă тумтирсем

ЭЛĔК. Мăн-Вылă ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем юлашки кунсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 3 кĕрĕк пиншак, 8 мăшăр çăматă, 6 мулаххай, 8 мăшăр алшиш, ваткăллă 4 фуфайка тата шалавар, 7 мăшăр çăм чăлха пачĕç.

И. ЕВДОКИМОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Пур ĕçсене те план тăрăх туса пыратпăр

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн районри чылай колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç вăйланчĕ. Малтанрах вăрахăн хатĕрленнĕ колхозсем те васкасах ĕçлеме тытăнчĕç. Çĕнĕ Шелттемри «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз февраль уйăхĕнче уя 3 пин лав тислĕк кăларчĕ. Çапла вăл хĕллехи вăхăтра уя тислĕк кăлармалли плана ытлашшипех тултарчĕ. Бригадирсем хушнипе шкул ачисем кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкне пухсах тăраççĕ. Çак иртнĕ кунсенче вĕсем 120 центнер кĕл, 65 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç.

Колхозăн пур тĕрлĕ вăрлăхсем те çитеççĕ. Вăрлăхсене тасатма уйрăм колхозниксене çирĕплетнĕ. Ку таранччен вĕсем пурĕ 480 центнер вăрлăх сортланă. Халĕ пăрçапа пăри вăрлăхĕсене сортлаççĕ.

Часах ялхуçалăх машинисене те юсаса çитереççĕ. Иртнĕ вунăкунлăхра 15 плуг, 3 сеялка юсанă. Халĕ урапасемпе сӳресене юсаççĕ, ут таврашĕсене тӳрлетеççĕ.

Колхоз правленийĕ çуракине хатĕрленсе ирттермелли çирĕп план тунă. Кашни бригадăн, колхозникĕн мĕн тумаллине планра татăклă палăртнă.

— Пирĕн задача, — тет колхоз председателĕ Викторов юлташ, — çав плана тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырасси.

Кармамири Чапаев ячĕпе тăракан колхоз çуракине малтан тунă план тăрăх хатĕрленет. Февралĕн 20-мĕш тĕлне уя 1500 лав тислĕк кăларнă, 100 центнер ытла кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 80 центнер кĕл пухнă. Ялхуçалăх машинисене (24 плуг, 5 сеялка) юсаса хунă. Халĕ урапасемпе сӳресем юрăхлине тĕрĕслеççĕ, çĕмрĕккисене юсаççĕ. Вăрлăхсене пĕр хут сортланă та халĕ татах триер витĕр кăлараççĕ. Вăрлăхсене тасатас тĕлĕшпе уйрăманах Зайцев, Егоров колхозниксем тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Вĕсем ĕçе ирех тухаççĕ те тĕттĕм пулмасăр та кĕмеççĕ.

Вăрлăхсем хатĕр

СЕНТĔРВАРРИ. Районри колхозсем хĕрсех çуракине хатĕрленеççĕ. Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсен чĕнĕвне сӳтсе явнă хыççăн çак ĕç тата вăйланчĕ.

Малти Чиперуйри Урицкий ячĕпе тăракан колхоз вăрлăхлăх тырăсене çителĕклĕ таран уйăрса сортласа çитерчĕ. Акма уйăрнă пăрçа-ясмăка колхозниксем алăпа суйласа хучĕç. Агротехникăллă мероприятисене пурне те пурнăçласа çитерес тесе, колхозниксем кашни кун тăрăшса ĕçлеççĕ. Паянхи куна 33 центнер кĕл, 17 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пуçтарнă, уя 640 лав тислĕк кăларнă.

Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхозра çуракине хатĕрленес ĕçре шкулта вĕренекен ачасем те лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем ятарласа бригадăсем органзациленĕ. Халĕ вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса кĕл пухаççĕ. Колхоз уя 1908 лав тислĕк кăларнă, ялхуçалăх машинисемпе урапасене юсама тытăннă.

А. РАЗИН.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Чаплă патриот Матвей Кузьмин

Матвей Матвеевич Кузьмина ялта çынсемпе хутшăнма юратман çын тесе шутланă. Вăл ялан пĕччен çÿренĕ, кăмăлĕпе сулхăн, калаçма юратман çын пулнă; пăшал йăтса йыттипе пĕрле вăрмансемпе шурлăхсем тăрăх пĕччен çÿреме юратнă. Суркунне, йывăçсем папкаланма пуçласан, кăвакарнă юр çине каркăсем анса итем хывма тытăнсан, вăл, хăй ывăлĕн ачине Ваççăна ертнĕ те, иççетри кÿлĕ хĕррипе кайса, шалаша вырнаçнă, унта вара эрни-эрнипеле çукалса пурăннă.

Эрнипеле калаçмасăр вăрмансем тăрăх çÿрекен çынна кам-ха ăнлантăр? Çавăнпа та колхозниксем ăна юратма мар, унпа тĕл пуласран та темĕнле пăрăнарах çÿренĕ. Анчах вăл, сакăрвунă çулти старик пулин те, колхоз хуралĕнче лайăх тăнă. Матви мучи хăйĕн лапсăркка та хаяр йыттипе, Шарикпе, сыхласа тăракан колхоз пурлăхне пырса вăрлама округĕпе те пĕр çын тупăнман. Ун патне кăнтăрла та, çĕрле те пырса тĕкĕнме хăрушă пулнă.

Яла нимĕçсем йышăнса килсен, темĕнле сутăнчăк мухтаса панă тăрăх, нимĕç коменданчĕ çакă халăхпа хутшăнман старике ял старости туса хуни питех те лайăх пулмалла тесе шутланă. Ăна комендант патне чĕнтернĕ. Стаканпа ерех ĕçме сĕннĕ. Матвей Матвеевич, сывлăхĕ начарри çине сулса, эрехе тытман. Çавăн пекех вăл хăйне староста тăвас тенипе те килĕшмен. Эпĕ ватă, халăхсем илтмеççĕ, сывлăх та начар, тенĕ вăл. Нимĕçсем ăна тивмен.

Çапла пурăннă Кузьмин старик ял хĕрринчи пĕр пĕчĕк пÿртре. Унăн сысна та, ĕне те, чăхсем те, хурсем те — нимĕн те пулман. Çавăнпа пыйтланнă ывçă нимĕçсен ку старик патне пыма сăлтавĕ те тупăнман, ăна никам та пырса тĕкĕнмен.

Çак ялтан темиçе вунă километр аяккарахра Горбунов командир ертсе пыракан часть пырса вырнаçать. Нимĕçсен командованийĕ Горбунов чаçне аплакăлама приказ панă. Çак ĕçе тума нимĕçсене вăрманти вăрттăн сукмака пĕлни кирлĕ пулнă. Çав сукмакпа вĕсем пирĕн чаçăн оборона линийĕ хыçне пырса кĕме пултарнă пулĕччĕç. Ун пек вăрттăн сукмаксене кам-ха лайăх пĕлме пултарать? Нимĕçсем хайхи старике аса илеççĕ. Матви мучи хăй ĕмĕрĕнче кунти вăрмана пайтах урлă-пирлĕ каçнă, вăл унти кашни пĕчĕк шурлăха, кашни пĕчĕк хыр йывăççине тĕллĕн пĕлсе тăнă. Старике офицер патне чĕнеççĕ. Офицер ăна нимĕçсен батальонне пирĕн войскăсен тылне ертсе кайма хушать. Кирлĕ çĕре аван çитерсен, старике награда — укçа, çăнăх тата пит те хÿхĕм сунар пăшалĕ пама пулаççĕ.

Старик, сурăх тирĕнчен çĕлетнĕ çăмлă çĕлĕкне чăмăртакаласа, офицер умĕнче чылайччен шухăшласа тăнă. Офицер, вăл килĕшессине чăтаймасăр вĕтсе, ун çине пăхкаланă, пÿрни вĕçĕсемпе сĕтеле шăкăртаттарнă.

— А укçине мĕн чул паратăр? — ыйтнă юлашкинчен ватă сунарçă.

— О, нимĕç командованийĕ хăйшĕн тĕрĕс ĕçлекенсене наградăлама укçа хĕрхенмест. Калăр ăна: пин тенкĕ паратпăр, — тенĕ офицер.

Старик офицер сăмахне вырăсла курса панине итлесе те кăвак куç харшийĕсем айĕпе офицер çине [illegible]иччен пăхса тăрса каланă:

— Йÿнех илесшĕн эсир.

— Ну, пин çурă, ну ака пин тенкĕ еппин! — тенĕ шартлама тытăннă офицер.

Старик çĕлĕкне [illegible] ку-çĕсем çинелле антарса ларса: «Юрать, илсе кайăп сире пĕр [illegible] вăр-тăн сукмакпа», тесе хунă.

Колхозниксем ăна офицерсем хатте-рĕнчен тухса хăйĕн [illegible] кăвак сухалĕ витĕр мăкă[illegible]нинне курнă. Тепĕр сур [illegible] кол-хозниксемех Матвей Матвеевичăн ывăлĕн ачи, Вася, пÿртрен [illegible]е те курнă. Вăл, йĕлтĕр[illegible]ă та, çырма урлă каçса, [illegible]нтар-нă. Старик хăйĕн [illegible]сене урама йăтса тухнă [illegible]ăнма тытăннă. Мĕнле т[illegible]тарик нимĕçсене ертсе [illegible]пĕл-сен, нумайĕшĕсем [illegible]хут-шăнма юратман ст[illegible]ыл-ханинă, мĕншĕн ăна [illegible]вă-хăтрах хуса кăлар[illegible] тесе пăлхарланнă.

Каçхине нимĕçсен йĕлтĕрлĕ батальонĕ, капитан ертсе пынипе, пĕтĕм хĕçпăшалĕсене илсе, пулеметсене çунашкасем çине тиесе, ялтан тухнă та вăрмана кĕрсе кайнă. Батальон умĕпе сунарçăлла ярăнтарса утса, Матвей Кузьмин пынă. Батальон вăрмана кĕрсе кайса курăнми пулнă. Старик нимĕçсене пĕр йĕрсĕр юр тăрăх илсе пынă. Отряд çĕрĕпех юр кĕрчĕсем, пушă вырăнсем, çырмасем тăрăх пынă. Офицер, çула пĕрмаях компас тăрăх асăрхаса пыраканскер, старике темиçе хутчен те чара-чара тăратнă. Нимĕçлерен куçаракан урлă текех—час çитетпĕр-и,—тесе ыйтнă. Старик кашнинчех пĕр евĕрлĕ ответпа: «Чим-ха, чим, ире хирĕç çитетпĕр», тесе лăплантарнă.

Ирхи сутă килсен, отряд вăрманти пĕр ăшнене тухнă та йывăç тĕмисемпе витĕнсе выртакан сакăлта çыранлă вар хĕррине чарăнса тăнă. Старик çĕлĕкне хывса унпа тарланă пуçне шăлса илнĕ, малтан юрпа хупланă уй çинелле хăпаракан хĕвеле пăхса илнĕ, унтан вăрăм çулта йăлтах ывăнса çитнĕ нимĕçсем çине пăхнă, вĕсем вăрмантан тĕмисенчен çаклаиса чĕркеленнĕ тасамар халачĕсемпе тухса тулнă. Вăрманта çавтери лăпкă, тÿлек пулнă. Ку шăплăхра урасем айĕнчи юр шатăртатни тата пĕчĕк тĕмисем çинче ларакан хĕрлĕ кăкăрлă уйăпсем чĕнкĕлтетни те уççăнах илтĕнсе тăнă.

Лăпкă тавралăха [illegible] ранлă çырма енчен пулемет сассипе янраса каять. Сывăхранах тÿрех тĕллесе пенĕ пирĕн пулеметсем. Темиçе вуншар нимĕç салтакĕ мĕн пулса тăнине тавçăрса иличчĕнех юр çине персе анкă. Пулеметсем çаплах сăптарнă та сăптарнă.

Офицер старик патне ыткăнса пынă. Матвей Матвеевич çарапуçăнах пĕр тĕмеске çинче тăнă. Вăл аякранах курăннă. Ун кăвак çÿçĕсене çил вăркăштарнă. Хĕсĕнсе тăракан куçĕсем, çăра куçхаршисем айĕпе çиллĕн ялтăраса, кăвакрах халат тăхăннă нимĕç салтакĕсем юр çине пута-пута ÿкнине, каллех çĕклеисе унталла та кунталла чупнине тăрăхланăн пăхса тăнă.

Тарăхса чĕтрекен пулнă офицер револьверне туртса кăларнă та старик çине тĕлленĕ. Старик хуллен кулса янă.

— Ватă Матвине укçалла илме шутларăн, пин тенкĕсем патăн, сволочь! Совет çынни чунĕ сутăнмасть. Хăвăн пинÿсемпе вилĕм илтĕн эсĕ, йытă!

Хăй çинелле тĕлленĕ револьвертен старик йĕрĕнÿллĕн пăрăнса тăнă. Çак вăхăтрах вăл çакна та асăрханă: пирĕн пулеметчиксем, старике лектересрен хăраса, ун патнелле пемен. Çакна нимĕçсем те туйса, вăрмана старик тăракан çĕртен тарса кĕме пуçланă. Старик, хăйĕн çăмламас çĕлĕкĕпе сулласа илнĕ те, пулеметчиксем çине анăратса кăшкăрнă:

— Кастарăр, ан шеллĕр ватă Матвине, сăптăрăр çĕлен-калтасене—сăптăр, пĕр сволочĕ те чĕррĕн шăвăнса ан кайтăр!

Старик сăмахне каласа пĕтереймен, çĕре çаврăнса ÿкнĕ. Ăна офицер пенĕ пуля пырса лекнĕ. Анчах офицерĕ хăй те тарса хăтăлайман. Старикрен айăккалла пĕр-ик утăм та ярса пусайман, çавăнтах пулемет пульлисем пырса çаптипе сăмсипеле юр çинелле тăрăннă.

Пирĕн окопран сиксе тухнă боецсем, винтовкисене хатĕр тытса, таракан нимĕçсене хăваласа тытăннă. Чупса пынă çĕртенех вĕсем таракан тăшманăн салтакĕсене пере-пере ÿкернĕ, штыксемпе чикнĕ, прикладсемпе çапа-çапа тăрăнтарнă. Çак боецсемпе пĕрлех ватă сунарçă ывăлĕн ачи—Вася Кузьмин та чупса пынă. Ăна хăйĕн асламăшĕ пирĕн чаçсене нимĕçсем тапăнма пуçтарăнни çинчен систерме малтарах кăларса янă пулнă.

Хĕрлĕ Çар чаçне пĕтерме пынă тăшман отрядĕнчен пĕр нимĕç те тарса хăтăлайман. Вăрманти юр çине фашистсен 250 ытла вилли выртса юлнă.

Çакăн пек тунă Матвей Матвеевич Кузьмин, ватă колхозник. Хăйĕн пурнăçне вăл питех те хаклă хакпа сутнă, —нимĕç захватчикĕсен çав пĕр пурнăçшăн 250 пурнăç парса тÿлеме лекнĕ.

Б. ПОЛЕВОЙ.
(«Правда», февралĕн 26-мĕш).

Канма тухнă вырăнта

ДЕЙСТВУЮЩИ ÇАР. Эпир фронтран аякри районсенчен пĕринче пултăмăр. Кунта тупă-пăшал сасси те илтĕнмест, çапăçусем те çук. Анчах кунта малти позицирингчен кая мар пурте пĕтĕм вăя хурса вирлĕн фронт валли, çĕнтерÿ валли ĕçлеççĕ. Кунта Хĕвеланăç фрончĕн резервĕсем. Эпир вĕсен пĕтĕм расналăхĕсене, аплă та пысăк вăй-хăватне куртăмăр. Ку резервсенче мĕн-мĕн пуррине пĕтĕмпе тĕп-тĕрĕссĕн часах хисеплесе тухма та çук пулĕ. Çакна кăна каланипе те ĕç аванах курăнса тăрать: действующи çĕрти войскăсем çапăçса малалла кайса пыраççĕ пулсассăн, çав вăхăтра вĕсен тылĕнче çав Хĕвеланăç фрончĕн вăрçа кĕрсе тухнă, çапăçусенче пиçĕнĕ пысăк соединенисем лăпкăн канаççĕ. Çĕнĕ боецсем хутшăнса пыраççĕ, чаçсем çĕнĕ хĕçпăшал илеççĕ, вĕренсе çĕнĕ çапăçусене кĕме хатĕрленеççĕ. Унтан çак вăйсем пĕр-пĕринпе улшăнаççĕ, Мускав таврашĕнчи çапăçусенче пулнă, тупă-пăшал тарĕн шăрши çапнă, хисеплĕ боецсем канма тухаççĕ, вĕсен вырăнне, вĕсен рубежĕсене лайăх каннă, çĕнĕ вăй илсе тĕрекленнĕ чаçсем пырса тухаççĕ.

Эпир çакăнта курни-пĕлнисем пурте тăшмана хăвăртрах çĕнтерессишĕн тăрăшнине ним иккĕленÿсĕр шантарать.

Воробьев майорăн танковăй отделенийĕнче паян питĕ пысăк савăнăçлă кун, пысăк уяв. Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн февралĕн 23-мĕшĕнчи приказне илнĕ. Батальон хыр вăрманĕ хĕррине хăйĕн танкĕсемпе автомашинисем умне тăрса тухать. Батальон комиссарĕ Машин юлташ юр кĕрчĕ çине çÿллĕрех вырăна хăпарса тăрать те приказа хисеплĕн те уççăн вуласа парать. Боецсемпе командирсен стройĕ, ним хусканми те шăп итлесе тăрать. Кашнилех Хĕрлĕ Çарăн боевой çулĕйĕрне аса илет. Отечественнăй аслă вăрçăн картинисем, чакса пыракан çар тăшмана вирлĕн çапса хăйне каялла хăвалама тытăнни, вăхăтлăха тÿсме тивнĕ йывăрлăхсенчен халĕ пысăк çĕнтерÿсен çулĕ çине тухса пыни куç умне тухса тăрать. Часах, часах акă пĕтĕм совет çĕрĕ çинче хĕрлĕ ялавсем çĕнтерÿллĕн вĕлкĕшсе тăрĕç. Комиссар вулать: «Пирĕн çĕршывра фронта пулăшма резервсем хетĕрлессине пĕр минутăлăха та вăйсăрлатмалла мар. Урса кайнă тăшмана çĕмĕрмешкĕн çĕнĕрен çĕнĕ чаçсене фронта ярса тăрас пулать».

Пурте çакна ăнланаççĕ. Çакăнта тăраканнисем пурте çĕнтерÿ телейне, çĕнтерÿ савăнăçне туйса курнă ĕнтĕ. Вĕсем захватчиксене тупă-пулемет вут-çулăмĕпе çунтарса тата гусеницăсемпе таптаса аркатса тăкнă, халĕ кунта, кĕске вăхăтлăха канма, çĕнĕ йышши машинăсемпе паллашса хăнăхмашкăн тата пулса иртнĕ çапăçусенче илнĕ тактика опычĕсене çирĕплетме тухнă. Вĕсем кунта ик-виç кун хушшинче чертежсемлĕ, схемăсемлĕ классем туса хунă. Вĕренмелли машинăсен пайĕсене, деталĕсене сарса хурса тата тĕрлĕ схемăсем тăрăх вĕренме тытăннă. Çапăçусем хыççăн кĕске вăхăта канма тухсассăн вĕренмелли пĕчĕк академи туса хунă.

Гитлерăн темĕн пек мухтаса пĕтернĕ, тутăхнă та пысăк катастрофа умĕнче тăракан çар машини халĕ çавăн евĕрлине мĕне те пулин тăвать-и?

Приказа вуласа пĕтерчĕç. Комиссар Хĕрлĕ Çарăн юратнă наркомне сывлăх сунса сăмах калать те ун хыççăн «урра» кăшкăрни виçĕ хутчен вăрман тăрăх янăраса каять.

Трибуна пек юр купи çине пĕрин хыççăн тепри — кĕçĕн политрук Марченко, кĕçĕн командир Поспелов, лейтенант Палей, аслă политрук Романович хăпарса тăрса сăмах калаççĕ. Наркома шантарса, унăн приказне пурнăçа кĕртетпĕрех тесе вĕсем сăмах калаççĕ. Пирĕн танксем ним чарăнса тăмасăр шав малалла, Хĕвеланăçнелле кайса пырĕç. Эпир хамăрăн тăван украинецсене, белоруссене, эстонецсене, латышсене, литовецсене захватчиксен пусмăрĕнчен хăтаратпăр.

Каллех хыттăн «урра» кăшкăрни янăрать. Митинг пĕтрĕ. Боецсемпе командирсем классене—ĕçлеме, вĕренме, унтан пĕрер е тепрер эрнерен каллех çапăçăва кĕме хатĕрленме йĕркеллĕн утса каяççĕ.

П. ЛИДОВ.
(«Правда», февралĕн 25-мĕш).

Герард Егер капитана тыткăна илни

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн артиллеристсем, пехотăпа пĕрле пулса, фашистсене вĕсен опорнăй пункчĕсенчен çапа-çапа кăларнă.

Çак вăхăтра хăйĕн дивизийĕн штабĕпе юнашар наблюдательнăй пунктра нимĕçсен йывăр батарейин командирĕ капитан Герард Егер пулнă.

Çак ир капитанăн хăйĕн наблюдательнăй пунктне час-часах улăштарма тивнĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсене 3. ялĕнчен çапса кăларнă. Дивизион штабĕ тарнă, унпа пĕрлех капитан та тарнă. Анчах вăл тепĕр ялта вырнаçса ларма та ĕлкĕреймен, нимĕçсене пирĕн боецсем хăваласа та çитнĕ. Егер капитанăн татах тармалла пулнă. Çапла, тăватă сехет хушшинче капитан халăх пурăнакан виçĕ пунктран тарнă. Каçхине вăл хăйĕн штабне çухатнă та вăрманта пĕр пĕчченех тăрса юлнă. Çĕр каçах вăл юрпа хупланнă уйхир тăрăх, персе амантнă тискер кайăк пек çÿренĕ, ирхине вара хăй тухса кайнă вырăнах пырса çитнĕ. Ăна пирĕн боецсем ярса тытнă.

Акă вăл, фашистсен урнă кашкăрĕ, 1930 çултанпа гитлерла партире тăраканскер, капитан Герард Егер, икĕ «тимĕр хĕрес» орденĕн кавалерĕ, пуçне усса ларать.

Вăл Германи çарĕ пысăк çухатусем тÿсни çинчен, уйрăмах офицерсем нумай пĕтни çинчен, офицерсенчен нумайĕшĕсем текех Германи çарĕ çĕнтерессине шанманни çинчен каласа парать.

Гитлер йăнăш турĕ, Гитлер йăнăш турĕ, тесе Егер темиçе хутчен те калать...

3-мĕш рангри интендант А. РОЗЕН.
(«Известия» хаçатран).

Колхозник-старик Савченко 7 фашиста тытнă

ФРОНТ ÇУМĔНЧИ РАЙОН, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Тĕттĕм çĕрле пулнă. К.-П. поселокĕнче пурăнакан Александр Петрович Савченко ятлă 70 çулхи старик-колхозник алăкран такам шаккаланине илтнĕ. Старик алăка уçнă. Пÿрте 7 нимĕç фашисчĕ кĕрсе тăнă. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем хăваланинчен тарса çÿрекенскерсем пулнă. Çак бандитсем, старике хĕçпăшалпа хăратсах, ĕçме-çиме ыйтса илнĕ те, апатланнă хыççăн выртса çывăрнă.

Нимĕçсем çывăрса кайсан, Савченко вĕсен хĕçпăшалĕсене туллалла йăтма пуçланă. Винтовкисене пурне те пÿртрен илсе тухса пытарнă. Юлашкинчен вăл граната тытса алăк патне тăнă та хыттăн кăшкăрса янă:

— А ну, сволочьсем, давай парăнăр, унсăрăн халех гранатăна сирĕн çине яратăп. Чĕррĕн хăлармастăп,—тенĕ.

Нимĕçсем хăйсен хĕçпăшалĕсене хунă вырăна чупса пынă, анчах та унта вĕсен йĕрри те пулман.

Александр Петрович тыткăна илнĕ нимĕçсене çав вăхăта пырса çитме ĕлкĕрнĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсен аллине панă.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ). Укерчĕк çинче: лейтенант В. И. Ростовăн командир пулса ертсе пыракан кавалери эскадронĕ атакăна кĕрет.

А. ГРИБОВСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Пирĕн войскăсем нимĕçсен 16-мĕш армине çавăрса илни

Август уйăхĕн пуçламăшĕнче нимĕçсем, питĕ пысăк çухатусем туса, Старая Русса районне тытса илме пултарчĕç. Германи командованийĕ кунта хăйĕн полкĕсемпе дивизийĕсене нимĕн тĕллевсĕрех илсе килмен. Старая Русса хулипе унăн таврашĕнчи район стратеги тĕлĕшĕнчен питĕ паха вырăн пулса тăрать. Кунта виçĕ чугунçул, 7 шоссе çулĕ пĕрлешеççĕ. Çакăнтан ĕнтĕ нимĕçсем Мускава çурçĕр енчен хупăрласа илме, урăхла, каласан, столицăна çурçĕрпе пĕрлештерсе тăракан пирĕн коммуникацисене татса илме шутланă.

Ильмень кÿлли районĕнче Хĕрлĕ Çар нимĕç оккупанчĕсене хирĕç питĕ хаяррăн çапăçнă. Фашистсен нумай танкĕсем, орудийĕсем, автомашинисем юханшывсенче путнă, шурлăхсене кĕре-кĕре ларнă; нимĕçсен пиншер салтакĕсем кунта хăйсен вилĕмне тупнă. Фашистсем хисеп тĕлĕшĕнчен вăйлăрах пулнă пирки пирĕн чаçсен каштах каялла чакма тивнĕ. Пирĕн боецсем, кашни рубежрах противника хаяррăн хирĕç тăрса, Старая Русса хулинчен Çурçĕр-Хĕвелтухăç еннелле куçса пынă. Ильмень кÿлли патĕнчи çапăçусем вăрăма тăсăлнă, юлашкинчен вара фронтăн çак участокĕнче нимĕçсем хăйсен наступлени планĕсене пурнăçа кĕртеймесĕрех пăрахăçланă.

Пирĕн войскăсем çак участокра тăватă уйăх ытла оборонăра тăнă. Пирĕн оборона линийĕ Старая Русса хулинчен вăтамран 50 километр аякра пулнă. Анчах та пирĕн войскăсем окопсемпе землянкăсенче пытанса ларман. Час-часах контратакăсем туса, тăшман хушшинче вилĕм сарса, противника халран ярса хăвшатса пынă.

Оборонăна куçсан нимĕçсем Старая Русса районне хăйсен аллинче нумайччен тытса тăма шутласа тĕрлĕ укреплениссем нумай туса пĕтернĕ. Темиçе уйăх хушшинчех вĕсем ДЗОТ-сен вăйлă системине, танксене тытса чармалли шăтăксемпе чăрмавсем тунă, хула патне пымалли пур çулсемпе вырăнсене те минăсем лартса тухнă. Çав укреплениссене туса пĕтернĕ хыççăн нимĕçсем Старая Русса хулинче хăрушсăрлăхра ларатпăр тесе шутланă пулас. Çурçĕр енчен Ильмень кÿлли шывĕпе çыран хĕрринчи шурлăхсем, çурçĕр-хĕвелтухăç енчен ДЗОТ-сен сăнчăрĕ, хула фронтран 50 километр аякра ларни — çаксем пурте совет войскисем пырса кĕрессинчен шанчăклă сыхласа тăраççĕ тесе шутланă нимĕçсем.

Шăпах çакăн пирки ĕнтĕ Старая Русса хулинче нимĕçсен продовольстви склачĕсемпе базисем, горючи, кĕпе-тумтир склачĕсем нумай пулнă. Кунта вĕсем автомашинăсем юсамалли пысăк база тунă. Çав базa талăкне 100-шер автомашина юсаса кăларма пултарнă. Кунтах госпитальсем те нумай пулнă. Германин Тихвинпа Волхов патĕнче аркатса тăкнă дивизийĕсен юлашкийĕсем хăйсен суранĕсене сиплеме, канма кунта пухăнса килнĕ. Фашистсем Старая Русса хулинче ларса хĕл каçма шутланă. Вĕсем фронтăн ку участокĕнче вырăссем наступлени тăвас çук тесе, шансах тăнă.

Анчах та пирĕн войскăсем наступлени тума хатĕрленнĕ. Вĕсем таткăлă наступлени пуçласа яма приказ илнĕ.

Старая Русса хулине тытса илес тĕллĕшпе палăртнă ĕçсен ăнăçăвĕ чи малтанах кĕтмен çĕртен тата хăвăрт маневрсем тунипе палăрса тăрать. Чаçсем умне май килнĕ таран хăвăртрах малалла куçас, хула патне пыракан пур çулсене те тытса илес, унтан вара штурм пуçласа ярас задача лартнă. Пирĕн войскăсем юр хĕвсе кайнă уйхир урлă темиçе колоннăсемпе фронт линийĕ урлă каçнă. Пĕр подразделени пуçĕнче Иван Грозный партизан пынă. Вăл çак вырăнсенче çуралса ÿснĕ çын пулнă, кунта вăл кашни сукмака, кашни йывăç тĕмине пĕлнĕ. Çавăнпа та вăл палăртса хунă пункт патне пирĕн чаçе шанчăклăн ертсе кайнă.

Старая Русса хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăç енче укреплениссем тунă пирки хула патне çурçĕр енчен пырассишĕн нимĕçсем нимĕн те пăшăрханман. Нимĕçсен командованийĕ шурлăхсем, юханшывсемпе кÿлĕсем оборонăна шанчăклăн хÿтĕлесе тăраççĕ тата войскăсем иртсе каймалла мар чăрмавсем пулса тăраççĕ тесе шутланă. Анчах та нимĕçсем пĕр хут çеç мар ĕнтĕ йăнăш шутлаççĕ. Кунта та вĕсем çавнашкалах йăнăш тунă. Вĕсем пирĕн халăхра мĕн тери иксĕлми вăй пуррине, пирĕн çĕршыв çинче оккупантсен мĕнле кĕтменлĕхсемпе тĕл пулма тÿрĕ килнине, пирĕн çутçанталăк вĕсем валли мĕнле ăнсăртлăхсем хатĕрлесе хума пултарнине ăнланса илеймен.

Августпа сентябрь уйăхĕсенче Ильмень кÿлли таврашĕнчи шурлăхсемпе Ловать тата Полист юханшывĕсем нимĕçсемшĕн питĕ пысăк чăрмавсем пулса тăнă. Çав шурлăхсемпе юханшывсем урлă хывнă кашни кĕпершĕн, тытса илнĕ кашни километр çĕршĕн вĕсем хăйсен юнĕпе питĕ хаклă тÿленĕ. Халĕ, хĕлле, шăнса ларнă юханшывсем пирĕн войскăсемшĕн тăвайккисĕр-мĕнсĕр, лакăм-лĕкĕмсĕр яп-яка шоссе çулĕ пулса тăнă. Пирĕн чаçсем çĕр каçах пăр тăрăх пырса тăшманăн тылне шала кĕрсе кайса, Старая Русса хули патне пырса тухнă. Саперсем хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр ĕçленĕ. Шăнса ларнă шурлăхсем урлă, таран юр çинче вĕсем пуртăсемпе, кĕреçсемпе çул хывнă. Пехота хыççăн артиллери пынă. Орудисене çунасем çине вырнаçтарса ларнă, вĕсем хыççăнах боеприпассем те илсе пынă.

Шартлама сивĕ вăхăт пулнă. Боецсен мулаххайĕсем çине пас ларса тухнă, анчах та колоннăсен шухăш-кăмăлĕ хавхаланулла пулнă. Ывăнчăк тесе никам та ÿпкелешмен. Красноармеецсем урапа тăхăнмаллисемпе снаряженисене малтанах тĕплĕн хатĕрлесе хунă. Питкуçпа ал-урасене тăм илесрен уйрăм мазьпе сĕрнĕ. Питĕ йывăр условисенче çĕр каçиччен 45—50 километр кайнă пулин те, пĕр боец та кая юлман, пĕр боеца та тăм илсе яман.

Колоннăсен маршрутне халăх пурăнакан вырăнсенчен тата противникăн çирĕплетнĕ участокĕсенчен аяккарах пулмалла шутласа тунă. Çапăçăва хула патĕнче тин пуçласа ярассине малтанах палăртса хунă. Çак операцисене тăвас умĕн партизансем пулăшнипе пур енчен те питĕ тĕплĕн разведкăсем тунă. Разведка илсе килнĕ сведенисем çавтери тĕрĕс пулнă. Малта пыракан чаçсем фронт линийĕ урлă каçса, пĕрре пăшал пемесĕрех, 45 километр шалалла кайма пултарнă. Колонна иртсе пынă çул çинче сылтăмра та сулахайра та нимĕçсен ялсенче вырнаçнă пĕчĕк гарнизонĕсем пулнă. Вĕсене пирĕн йĕлтĕрçĕсен отрячĕсем çавăрса илнĕ те пĕр-пĕринчен уйăрса хунă.

Фашистсем пирĕн чаçсем шалти тыла пырса кĕрессине нимĕн чухлĕ те кĕтмен. Нимĕçсен СС «Мертвая голова» дивизийĕнчи обер-ефрейтор Ганс Брок Демьянскран Старая Русса хулине мотоциклпа вĕçтерсе пынă. Пĕр ялта шурă халат тăхăннă çын ефрейтора сигнал парса чарнă. Тепĕр минутăранах Брокăн хĕçпăшалне туртса илнĕ. Медведно ялĕ патне пирĕн йĕлтĕрçĕсен отрячĕ пынă чухне пĕр çуртран офицер тухнă. Вăл: ку команда хăш полкран килнĕ, тесе ыйтнă нимĕç чĕлхипе. Анчах та офицерăн ответ илтме май килмен. Красноармеецăн пульли тивнипе вăл самантрах вилсе кайнă. Эрих Коберш та, Вальтер Цоор та тата тыткăна лекнĕ ытти нимĕçсем те çапла калаçа параççĕ: вырăссем Старая Русса патне пырса тухни пире, янкăр тÿпере аслати авăтса янă пекех, тĕлĕнтерсе хăратса пăрахрĕ, тесçĕ.

Пирĕн чаçсем хăйсен вăйĕсене йĕркелесе наступлени пуçласа янă. Фашистсен çĕр çинчи войскисене пулăшас тесе вĕсен авиацийĕ вĕçсе пынă, анчах те пирĕн боецсен наступленине нимĕн те вăйсăрлатма пултарайман.

Пирĕн войскăсем Старая Русса хулинче нимĕçсен пысăк гарнизонне хупăрласа илсе малалла наступлени туса пынă. Пирĕн наступлени тăвакан чаçсем, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене çине-çинех вăйлăн пыра-пыра çапса, тăшманăн оборона линийĕнчи хушăка аслăлатнă, противникăн çĕнĕ пысăк гарнизонĕсене хупăрла-хупăрла илнĕ. Вара пирĕн чаçсем Старая Русса районне часах пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ.

Нимĕçсен 16-мĕш армийĕ парăнма килĕшмен хыççăн Морозов, Грязнов тата Берзарин генералсен войскисем фашистсен гарнизонĕсене хирĕç атака тума пуçланă. Питĕ хаяр çапăçусем пуçланса кайнă.

Нимĕçсен 290-мĕш дивизийĕ йышăнса тăракан участокра уйрăмах хаяр çапăçусем пулнă. Çав дивизи халăх пурăнакан пĕр пысăк пункта хăйĕн хирĕç тăмалли тĕп вучахĕ туса хунă, ун тавра çирĕплетнĕ пунктсем питĕ нумай туса тултарнă. Вăл питĕ хаяррăн хирĕç тăнă. Çав дивизие аркатса тăкас тесе, унăн хирĕç тăмалли системине пĕтерсе тăкмалла пулнă.

Разведка туса тăшманăн оборонине тĕплĕн пĕлнĕ хыççăн пирĕн чаçсем противникăн хирĕç тăмалли темиçе пунктне хăвăрт атакăланă та вĕсене тытса илнĕ. Фашистсен оборонине çакăн пек татни наступлени тăвакансене тÿрех противникăн тĕп вучахĕ патне тухма май панă. Анчах çак вăхăтра противник пирĕн чаçсем çине питĕ вăйлă пеме тытăннă. Çапăçу татах та хаярланса кайнă. Совет артиллерийĕ тăшманăн укреплениййĕ çине татти-сыпписĕр персе тăнă, пирĕн пехота тăшман патне çывхарнăçемĕн çывхарса пынă.

Часах çĕрле пулнă. Пирĕн наступлени тăвакан чаçсем, çĕрлехи тĕттĕмпе усă курса, атакăна кĕрсе кайнă. Ирхине тĕлне фашистсен хирĕç тăмалли пунктне аркатса тăкнă. Пирĕн чаçсем противника сывлăш çавăрма памасăр хăвалаçа пынă, ăна пысăк çухатусем кÿнĕ.

Çапла вара нимĕçсен 290-мĕш пехотнăй дивизине аркатса тăкнă. Вăл чĕрĕ вăй тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те калама çук пысăк çухатусем тÿснĕ. Çакна ĕнтĕ нимĕçсен 2-мĕш армейски корпусĕн генералĕ Брокдорф та йышăнать. Хăй войскисене панă приказра вăл тÿрех çапла калать: вырăссен нимĕçсен фронтне татса кăнтăр еннелле куçма, пирĕн коммуникацисене татса корпусăн чаçĕсене пысăк поражени кÿме май килчĕ. Нимĕн тума аптăраса ÿкнĕ пирки, вăл хăйĕн салтакĕсене хирĕç тăма чĕнет, çирĕп оборона тума хушать.

Çак вăхăтра фронтăн ытти участокĕсенче те хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Пирĕн войскăсем нимĕçсен 30-мĕш пехотнăй дивизине тата «СС» дивизине хупăрласа илнĕ. Вĕсем танатаран тухмашкăн темиçе хутчен те хăтланса пăхнă. Вĕсем хăйсен мĕншур резервĕсене çапăçăва кĕртсе ярса, темиçе хутчен контратака тунă. Анчах та фашистсен контратакисене пирĕн войскăсем ăнăçлăн сире-сире пăрахнă.

Хăйсен ĕçĕсем ăнăçсăр пынине кура, нимĕçсем пирĕн чаçсем пĕр-пĕринпе пĕрлешсе тăракан вăйсăртарах вырăнсене шыраса тупма шутланă. Вĕсем çав вырăнтан пырса çапса танатаран сăлăнса тухма ĕмĕтленнĕ. Анчах ку та вĕсене усă парайман. Нимĕçсен, хăйсен вăйĕсене вырăнтан-вырăна темĕн пекех куçарса çÿренĕ пулин те, пирĕн наступлени тăвакан чаçсен ретĕнче вăйсăр вырăн тупма май килмен.

Çав çапăçусене пула нимĕçсен 30-мĕш пехотнăй дивизийĕ тата «СС» дивизийĕ питĕ йывăр поражени тÿснĕ. Вĕсене аркатса тăкнă.

Халĕ Морозов, Грязнов, Берзарин генералсен войскисем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене малалла аркатса пыраççĕ. Нимĕçсен 16-мĕш армийĕ йĕрписавра çавăрса илнĕ ункă тăвăрланнăçемĕн тăвăрланса пырать. Халăх пурăнакан нумай пунктсенче противникăн гарнизонĕсене хупăрласа илнĕ. Вĕсене халĕ пĕтерсе пыраççĕ. Фашистсем пысăк çухатусем тÿсеççĕ.

Старши политрук Е. ГЕХМАН.
(«Красная звезда», февралĕн 25-мĕш)

Ялхуçалăх кадрĕсене тимлĕн хатĕрлемелле

ВАРНАР. Отечественнăй аслă вăрçă ялхуçалăх умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Вĕсене пурнăçламашкăн колхозсенче ĕçе лайăх пĕлекен кадрсем кирлĕ. Кăçал пирĕн колхоз председателĕсене — 44 çын, хурт-хăмăр утарĕсенче ĕçлекенсене 24 çын, кок-сагыз культурипе ĕçлекенсене — 10 çын, йĕтĕн енĕпе — 10 çын, махорка ÿстерес енĕпе — 40 çын, пахчаçăсене — 15 çын, машиноведсене — 50 çын, брынза-чăкăт тăвакансене — 15 çын вĕрентсе хатĕрлемелле. Паянхи кун тĕлне районра çак есăннă специальноçсем енĕпе мĕн пурĕ те 24 çынна çеç вĕрентсе хатĕрленĕ.

Кольцовкăри Ленин орденлă Сталин ячĕпе тăракан колхозра счетоводсен уйăх сурăлăх курсĕ, бригадирсемпе звеньевойсем хатĕрлекен курсем тата Янгорчинăри Ленин ячĕпе тăракан колхозра махорка акса ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлекен звеноводсен курсĕ тахçанах уçăлмалла. Анчах вĕсем халĕ ĕçлеме тытăнмен-ха. Ялхуçалăх кадрĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе çĕрĕç пайĕ питĕ вăрахăн ĕçлет.

Ялхуçалăх кадрĕсем вĕрентсе хатĕрлемелли плана кашни агроном патне, кашни колхоза çитерне. Ершипуç, Кĕстемĕр колхозĕсенче колхозниксене агротехникăна вĕрентме тытăнчĕç. Кунта колхозниксем агротехникăна вĕренес ĕçе суракиние хатĕрленес ĕçпе çыхăнтараççĕ. Анчах районри агрономсем çак ĕçе тума кирлĕ пек тытăнман-ха. Хăшпĕр колхозсен председателĕсем те кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе сÿрĕк туса пыраççĕ. Çĕньялкасси, Упнер, Хапăс тата ытти хăшпĕр колхозсен председателĕсем курсене çынсем яман.

Агротехникăна вĕренмелли чи лайăх меслетсем — агрокружоксем, стахановла шкулсем, курсем, семинарсемпе лекцисем пулса тăраççĕ. Çаксене организацилессине выранти парторганизацисен пуçарса ертсе пыни кирлĕ, райçĕрĕç пайĕн çак ĕçе организацилекен центр пулса тăмалла. Çакна паян кун районра курма çук-ха.

Учрежденисенче ĕçлекенсене, шкул ачисемпе учительсене ялхуçалăхĕнче ĕçлеме вĕрентессине те халех тытăнмалла. Апла пулин те Упнер, Мамалай, Кĕçĕн Кипек шкулĕсенче ку ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Çынсем районра çителĕклĕ. Колхозниксемпе колхозницăсене агротехникăпа зоотехника пĕлĕвĕсене парса çирĕп кадрсем хатĕрлесси, çав кадрсемпе ялхуçалăхĕнче 1942 çулта çĕнĕ çитĕнÿсем тăвасси — çĕрĕç пайĕн тата машинно-тракторнăй станцин ответлă задачисем пулса тăраççĕ. Ку задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен колхозсене вăйлăн пулăшса тăмалла.

В. МАКСИМОВ.

Финанс планне вăхăтра тултармалла

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Районти чылай колхозсем государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен тÿлесе татма тăрăшаççĕ. Акă «14 лет Октября», «Восход», «Парижская Коммуна» тата ытти колхозсем те виççĕмĕш пятилеткăн (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заем укçине срокченех тÿлесе татнă.

Упамса ялсоветĕнчи ĕççыннисем пĕр кавраха 1145 тенкĕ самообложени укçи тÿленĕ. Турхан ялсоветĕнчи колхозниксем пĕр уйăх хушшинче самообложени укçине 40 процент тÿленĕ. Пăлапуç, Нурăс ялсовечĕсене кĕрекен колхозсем укçа-тенкĕ пухмалли çуллăхăк планне 50 процент тултарнă. Ку ялсовечĕсенчи финагентсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Сăмахран, Т. Михайлов юлташ февралĕн 20-мĕш тĕлне пĕрремĕш кварталти финанс планне 60 процент ытла тултарнă. И. Семенов, Н. Лепешкин финагентсем те пĕрремĕш кварталти финанс планне 57—58 процент таран тултарнă.

Финагентсем хушшинче япăх ĕçлесе пыракансем те пур. Сăмахран, финагент П. Хромов юлташ пĕрремĕш квартал планне 19 процент кăна тултарнă.

Финагентсен укçа-тенкĕ планне вăхăтра тултарас тĕлĕшпе мĕнпур вăя хурса ĕçлемелле.

А. КОСОЙКИН.

* * *

ÇĔРПУ. (Хамăр корр.). Кочизăн Çĕрпÿ районĕнчи магазинĕнче ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çар кунĕ умĕн хăйсем çине пысăк обязательство илнĕ.

Магазин заведующийĕ Рахманов юлташ илнĕ обязательствăна вăхăтра пурнăçлас тесе, ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек йĕркеленĕ. Çавна май магазин кăçал февралĕн 20-мĕш тĕлне 20.500 тенкĕлĕх тавар сутнă. Пĕрремĕш квартал планне вăл ытлашшипех тултарнă.

КАНАШ. Вăтакас-Татмăш ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕ Н. Игнатьев арăмĕпе хăйшĕн вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине 500 тенкĕ тÿлерĕ. Çавăн пекех И. Яковлев, В. Яковлев, В. Антонова тата ытти колхозниксем те вăрçă вăхăтĕнчи налога тÿлесе татрĕç.

«Динамо» колхоз членĕ А. Мазутов юлташ вăрçă вăхăтĕнчи налога 400 тенкĕ тÿлерĕ. Тÿрĕ ĕçлекен колхозниксемпе единоличниксем вăрçă вăхăтĕнчи налога вăхăтра тÿлесе татма тăрăшаççĕ. Анчах ялсовет работникĕсемпе финагентсем колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе çителĕклĕ организацилемен. Вĕсем ку тарана çитсе те вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине тÿлемелли извещенисене колхозниксене пурне те салатса паман.

Т. ТУРХАН.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Тутар Элпуç ялсовечĕн налог агенчĕ Зейдулла Алеев юлташ колхозниксемпе единоличниксем хушшинче укçа-тенкĕ пухас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Вăл укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тултарас тĕлĕшпе ялти активпа тачăн çыхăнса ĕçлет. Колхозниксемпе единоличниксем хушшинче массăллă агитаци ĕçне лайăх туса пырать. Çавна пула колхозниксенчен нумайĕшĕ вăрçă вăхăтĕнчи налога пĕтĕмпех тÿлесе татнă. «Красный клевер» колхозри колхозниксем февралĕн 12-мĕшĕ тĕлнех вăрçă вăхăтĕнчи налога 60 процент тÿленĕ. Уйрăм колхозниксемпе колхозницăсем В. Смирнов, А. Димитриева, А. Захаров юлташсем вăрçă вăхăтĕнчи налога нимĕнрен малтан тÿлесе татса ыттисене пример кăтартнă.

Хирти Явăш ялсоветĕнчи «Красный воин» колхоз членĕсем те укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтченех тÿлесе татассишĕн кĕрешеççĕ.

П. МАРТЫНОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ ХУРА ТИНĔС ФЛОЧЕ. Укерчĕк çинче: контр-адмирал Н. Е. Басистый.

А. МЕЖУЕВПА Е. ХАЛДЕЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

Ĕç дисциплинине пăсни пулмалла мар

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче пирĕн предприятисенчи, фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, вăхăта шутламасăр ĕçлесе, ĕç дисциплинине çирĕплетсе пыраççĕ. Анчах уйрăм рабочисемпе служащисем ĕç дисциплинине пăсни ĕç тухăçлăхне чакарнине тата государствăна çавтери пысăк сиен кÿнине ку тарана çитсе те ăнланса илес-шĕн мар-ха.

Акă, сăмахран, Канаш районĕнчи Шаккăл ялповĕн Юманзарти отделенийĕнче ĕçлекен продавец Михайлов юлташ 1942 çулти январĕн 14-мĕшĕнче ирпе пĕр сехет ытла кая юлса ĕçе пынă. Анчах магазинра вăл çав кун пачах ĕçлеме пултарайман, мĕншĕн тесен вăл ирех ĕçсе ÿсĕрĕлме ĕлкĕрнĕ. Михайлов юлташ хăйĕн айăпне тĕрлĕ условисем çине ярса ăнлантарма пăхать. Вăл çапла калать:

— Манăн арăм куçпа чирленĕ, икĕ ывăл фронтра, эпĕ канмалли кун ĕçленĕ, çавăнпа ĕçе кая юлса тухрăм, эпĕ хама айăплă тесе шутламастăп,—тет.

Анчах арăмĕ чирли те, ывăлĕсем фронтри те Михайлов юлташа ирех ĕçсе ÿсĕрĕлсе, ĕç дисциплинине пăсма ниепле ирĕк те памасть. Михайлов юлташ иртнĕ çулта та ĕç дисциплинине пăснисем пулнă. Çавнашкал ĕç дисциплинине пăсакансем учительсем хушшинче те пулкалаççĕ. Октябрьски районра Пĕрремĕш Чурашри туллимар вăтам шкулти учитель Павлов юлташ январь уйăхĕнчех темиçе хут та ĕçе кая юлса тухнисем пулнă. Вăл январĕн 21-мĕшĕнче урока 5 минута кая юлса пынă, январĕн 26-мĕшĕнче 10 минута кая юлнă. Йĕркене çавнашкал пăсни çинчен Павлов юлташа шкул директорĕ асăрхаттарнă пулсан та, вăл январĕн 29-мĕшĕнче пĕр сехет вуçех вĕрентме тухман. Павлов юлташ 5 «А» класăн руководителĕ. Ку класра кĕркунне, вĕренÿ çулĕ пуçланнă чухне, шкула 44 ача çÿретчĕ, халĕ, кунта Павлов çавтери япăх ĕçленине пула 30 ача кăна юлнă.

Колхозниксем хушшинче те ĕç дисциплинине пăсакан уйрăм çынсем пур. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Упакасси ялсоветĕнчи «Трактор» колхоз сложнăй молотилкăпа авăн çапать. Февралĕн 6—8-мĕшĕнче трактористка П. Григорьева юлташ ĕçе тухман пирки молотилка пĕр усăсăр тăнă. Колхозниксем çак вăхăтра алăпа авăн çапнă.

Шупашкар хулинчи «Металлист» артельре ĕçлекен тимĕрçĕ Гладков юлташ январĕн 23-мĕшĕнче хăй ирĕкĕпех ĕçрен пăрахса кайнă.

Çавнашкал ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç татăклăнах кĕрешмелле, вĕсене вăрçă вăхăтĕнчи çирĕплĕхпе ответ тыттармалла.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Малтанхи кун

Икĕ эрне хушши практикăра пулнă хыççăн эпир, пир-авăр фабрики çумĕнчи ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем, февралĕн 20-мĕшĕнче хамăр тĕллĕн станокпа ĕçлеме тытăнтăмăр. Çак кун пирĕншĕн пуриншĕн те питĕ савăнăçлă кун пулчĕ. Эпир пурте ирпе 6 сехетре цеха пухăнтăмăр. Инструктор Т. И. Логинова юлташ пире ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕ те цеха ертсе кайрĕ. Унта пире кашнинех тем пысăкĕш, çап-çутă сутăлса ларакан станоксем умне тăратрĕ те хамăр тĕллĕн станоксене ĕçе ямалли майсем çинчен ăнлантарса пачĕ. Акă вăл пире станоксене ĕçе яма хушрĕ. Эпĕ станока мĕнле ĕçе ямаллине лайăх ăнлантăм, анчах пысăк станок çине пăхса илтĕм те темшĕн чĕре сÿçенчĕ. Инструктор ман çине вăл кулса ăшшăн пăхса илчĕ. Çакă мана хавхалантарчĕ. Эпĕ станока ĕçе ямалли ручкăна хăюллăн пăртăм та пысăк станок кĕрлесе ĕçлеме пуçларĕ. Акă эпĕ халĕ хам тĕллĕн станокпа ĕçлетĕп. Фронт валли васкавлă заказсем тума пулăшатăп. Ку мана питĕ савăнтарать, хавхалантарать. Манăн ĕçлес килет, пĕр сраксăр ытларах та ытларах продукци туса кăларас килет. Çакне тума эпĕ хамăн станока тирпейлĕ тытса усрама, унăн кашни пайĕнех тĕплĕн пĕлме, брак мĕн пирки пулнине хăвăрт сăнаса илме вĕренессишĕн кĕрешетĕп. Технологи процесне тĕплĕн вĕренсе çитсе, хăвăртрах пысăк квалификациллĕ мастер ятне илтес килет. Тăван çĕршыва усăллă çын пулас килет. Хамăн ĕмĕте пурнăçа кĕртме пĕтĕм вăй-халпа тăрăшса ĕçлетĕп.

Е. СЕРГЕЕВА.

Шупашкар районĕнчи коммунистсен пухăвĕ

КУКЕÇ. Февралĕн 25-мĕшĕнче коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ, вăл ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн пĕрлешÿллĕ пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-яврĕ. Ку ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Караушев юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик тата пренире тухса калаçакансем районри ĕççыннисем Сталин юлташ Октябрь кунĕсенче тунă докладра кăларса тăратнă задачăсене пурнăçласа фронта пулăшас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туни çинчен чарăнса тăчĕç. Районри 69 колхоз государствăна тыр-пул, 87 колхоз—аш-какай, 86 колхоз—сĕт, 99 колхоз çăм срокченех парса татрĕç. Оборона фондне 296 центнер тырă, 8 центнер аш-какай, 100 пин тенкĕ укçа çырнă.

Районри ĕççыннисем 3404 тир пухнă. Вĕсенчен выранти промартельсенче 203 кĕрĕк-тиншак, 396 мăйăр алшиш çĕлесе панă, 1537 килограмм çăм пухса 500 мăшăр çăматă йăвалаçа панă. Унсăр пуçне 400 мулаххай, 1150 мăшăр тăла, 500 мăшăр носки, 200 мăшăр кĕпе-йĕм пухса панă.

Промартельсем те хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек çĕнетрĕç. Районри артельсем 1941 çулти производство планне 11 процент тултарнă. Шăнкасри, Альгешри, Сĕньял Уйкасри промартельсем, чĕртаварпа тĕрĕс усă курса, ĕç тухăçлăхне хăпартса пырса, çулталăк планне 122—137 процент тултарчĕç. Вĕсем васкавлă заказсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçласа пычĕç.

Пуху Сталин юлташ кăтартăвĕсене пурнăçлас ĕçре чылай çитменлĕхсем пуррине те палăртрĕ. Район вăрман хатĕрлес тата турттарас плана начар пурнăçласа пырать. Мехлесопунктра куллен 100 лаша ĕçлес вырăнне 30—40 лаша çеç ĕçлеççĕ.

Суракине хатĕрленес ĕç те питĕ вăраххăн пырать-ха. Вăрлăхсене сортлас плана 13 процент, тислĕк турттарас плана 25 процент кăна тултарнă, торф турттарас ĕçе тытăнман.

МТС тракторсем юсас плана тултарман. Плугсем юсас ĕçе 52 процент, сеялкăсем юсас ĕçе 75 процент çеç пурнăçланă. Ялхуçалăх машинисене юсасси колхозсенче те начар пырать.

МТС, райçĕрĕç пайĕ тата колхозсен правленийĕсем кадрсем хатĕрлес ĕçе тивĕçлĕ хакламанни курăнать. МТС-ра 5 бригадир, 4 комбайнер, 12 тракторист, 13 машиновед çитмеççĕ. Трактористсен курсĕнче 57 çын вĕренмелле пулсан, халĕ 34 çын кăна вĕренет.

* * *

1941 çулти иккĕмĕш çурçул хушшинче Шупашкар районĕнчи парторганизацин партин ретне пĕтĕмпе 19 çын илнĕ. Вăл шутран кандидата 4 çынна, члена 15 çынна илнĕ. Парти ретне илнисем хушшинче трактористсем, колхозниксем, хĕрарăмсем сахал. Райсоюз, райуполнаркомзаг, Иккассинчи парторганизацисем иртнĕ тапхăрта парти ретне пĕр çынна та илмен. Иккассинчи тата МТС-ри парторганизацисем кандидатсене воспитани парас тĕлĕшпе куллен ĕçлемен. Çавăнпа та ку организацисенчи кандидатсен пурин те кандидат стажĕсем иртсе кайнă.

Пуху ВКП(б) райкомĕн, пуçламăш парторганизацисен тата уйрăм руководительсен çитменлĕхĕсене те хытă критиклерĕ. Сталин юлташ кăтартăвĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

Ытлашши тырра—государствăна

СĔНТЕРВĂРРИ. Районри колхозсем фронта вăйлăн пулăшассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем государствăна коопераци урлă тырă сутаççĕ.

Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхоз государствăна 6400 килограмм тĕштырă сутрĕ. Астакассинчи «Большевик» колхоз çак кунсенче государствăна 3450 килограмм, Юртакассинчи «Искра» колхоз — 3.182 килограмм, Пĕчĕк Хырти «Правда» колхоз — 3.336 килограмм, Амачкинăри «Красная звезда» колхоз — 3.200 килограмм тĕштырă сутрĕç.

А. РАЗИН.

Ĕçрен хăракан учительсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Анаткасри (Красноармейски р., Мартынкасси ялсовечĕ) пуçламăш шкулта вĕрентекен Осипов тата Анисимова юлташсем ĕçе япăх йĕркеленĕ пирки, вĕсен вĕренекенĕсем чылайĕшĕсем шкула çÿреме пăрахаççĕ. Осипов вĕрентекен классенче шкула çÿремелли ачасенчен 43 процентĕ çеç çÿрет. Анисимова вĕрентекен классенче 39 ачаран паянхи куна 16-шĕ çеç вĕренет. Ыттисем тĕрлĕ сăлтавпа шкула çÿреме пăрахнă.

Осиповпа Анисимова юлташсен кану кунĕсенче вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем патне каймалла, вĕсене хăйсен ачисене шкула çÿретес пирки ăнлантарса памалла. Анчах та вĕсем ун пек çÿреме юратмаççĕ.

Осипова тата ялти агитаци ĕçне туса пыма хушнă. Анчах вăл ÿркенет. Ăçтан пултартăр вăл агитаци ĕçне? Мĕншĕн тесен, Осипов хаçат-журналсем илмест, вĕсене вулама та юратмасть пулмалла. Çакăн пекех Осиповпа Анисимова юлташсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем парас ĕçе те хутшăнмаççĕ.

Вĕсем халăх хушшинчи ĕçсенчен е хăраççĕ, е ĕçлеме юратмаççĕ. Районри учительсен общественноçĕн Осиповпа Анисимова пек сÿрĕк учительсем çинчен хăйĕн сăмахне каламалла.

АНАТКАССЕМ.

Воскресник туса 7 тонна ыраш çапнă

ЭЛĔК. Писĕпри «Рой» колхозра февралĕн 15-мĕшĕнче воскресник пулса иртнĕ. Воскресникре ĕçлеме колхозниксемпе пĕрле учительсемпе шкул ачисем те тухнă. Воскреснике хутшăннă 60 çын 7 тонна ыраш çапса 34 ĕçкунĕ тунă. Вăл ĕçкунĕсем çине тухакан 102 килограмм тырра оборона фондне панă.

И. ЕВДОКИМОВ.

Мининпа Пожарский

Аслă вырăс халăхĕн историйĕ геройла чаплă ĕçсемпе пуян. Ун пек ĕçсем уйрăмăнах вырăс çĕрне ютçĕршыв çыннисем килсе тапăннă вăхăтсенче пулса иртеççĕ. Çакнашкал паллă вăхăтсенчен пĕри вăл XVII ĕмĕрĕн пуçламăшĕ — 1604—1612 çулсем пулса тăраççĕ.

Класлă хирĕçÿсем çивĕчленсе çитнипе çĕршыв пăлханса тăнă хушăра вырăс çĕрне ют государствăсем таткаласа пĕтерме шутланă. Анчах та аслă вырăс халăхĕ темĕн пек йывăрлăхсем килсе тухнă тапхăрсенче те хăйне ют государствăсен пусмăрĕ айне чикме паман, çакăнпа пĕрлех вăл хăйĕн государствин тĕрĕслĕхĕллĕхне те тытса тăма пултарнă.

1604—1612 çулсенче вырăс çĕрĕнче поляк шляхтисемпе шведсем хуçаланма пăхнă. Поляксем Мускав çинеллех талпăнса килнĕ, шведсем Новгорода йышăннă. Вырăс боярĕсем хушшинчи патша престолĕшĕн пыракан хирĕçÿпе усă курса, поляксен королĕ Сигизмунд, вырăс государствин престолĕ çине лартма, хăйсем енчен патша ывăлĕ тесе ĕнентерекен çынсене те тупса килнĕ. Çапла Россияра Иван Грозный патшан вĕлернĕ ывăлĕ Димитрий вырăнне—1-мĕш тата II-мĕш Лжедимитрисем (суя Димитрисем) тухса тăнă. Çав Лжедимитрисем хыçĕнче Сигизмунд корольпе унăн шляхтисем (улпучĕсем) пулнă.

Кĕске вăхăтлăха патшана кĕрсе ларнă 1-мĕш Лжедимитрие вĕлернĕ хыççăн Мускавра Сигизмунд çарне вăйлăн çĕмĕрсе тăкаççĕ. Патша вырăнне боярин Василий Шуйский ларать. Анчах та [illegible] вăхăтрах II-мĕш Лжедимитрий сиксе тухать. (Вăл Мускав çывăхĕнчи Тушино ялĕнче чылай вăхăт тăнăран, вырăс халăхĕ ăна «Тушинский вор» тесе ят панă). 1610 çулта В. Шуйские патшаран кăлараççĕ. Власть 7 çыннаран тăракан «[illegible] думи» аллине куçать. Анчах та боярсен думин авторитечĕ пулман. Ютçĕршыв интервенчĕсем, уйрăмăнах Сигизмунд король, вырăс боярĕсем хушшинче влаçшăн пыракан хирĕçĕве пур майпа та вăйлатса яма тăрăшнă. Вăл хăй енчен патша престолĕ çине лартма II-мĕш Лжедимитрие çĕкленĕ.

Халăх хушшинчи хисеплĕхĕ пĕтсе çитнĕ боярсен думи хăйне валли союзник интервентсем хушшинче шырать. Çакна пула думăри боярсем Ф. Мстиславский, Ф. Шереметьев тата ытти те, Сигизмундпа калаçса, вырăс халăхне ăна пăхăнтарса усрамалли план тăваççĕ. Çак килĕшÿ тăрăх интервентсен çарĕ Мускава йышăнса илнĕ.

Мускав лешьенче ларакан хуласем — Смоленск, Вязьма, Дорогобуж — интервентсене хирĕç хытă кĕрешнĕ. Ялсенче партизансен отрячĕсем ушкăнланнă. 1611 çул пуçламăшĕнче ополченецсен малтанхи çарне тунă. Анчах та вĕсем лайăх хĕçпăшалланнă интервентсене çĕнтерме пултарайман. 1611 çулти июнĕн 3-мĕшĕнче Смоленск хули парăннă.

Сигизмунд войскисем вырăс çĕрĕнче хăйсене тискеррĕн тыткаланă: ялсене çунтарнă, хресченсене çаратнă. Уйрăмăнах вĕсем Мускава илнĕ хыççăн — 1610—1612 çулсенче тискеррĕн ашкăнма пуçланă.

1611 çулта лару-тăру татах та йывăрланнă. Вырăс çĕрне çурçĕртен шведсем килсе Новгород хулине тытса илнĕ. Çак вăхăтрах дворянсенчен тата пуян казаксенчен тăракан малтанхи земски ополчени çарĕ те саланса кайма пуçланă. Ку ополченецсене ертсе пыракан Трубецкой князьпа Залуцкий хăйсем камсем майлă тănине палăртман. Çапла вара вырăс государствине интервентсенчен хÿтĕлекен нимĕнле хĕçпăшаллă вăй та пулман.

Интервентсем пусмăрлани, мăшкăлани, çаратни пĕтĕм вырăс государствинчи халăхсене хускатса янă. Халăх хушшинче Мускава ютçĕршыв интервенчĕсенчен хăтарас шухăш сарăлнă.

Халăх хушшинчи шухăша пурнăçа кĕртессишĕн чи малтан Нижний-Новгород (хальхи Горький хули) çĕкленнĕ. Ку ĕçе пуçаракансем халăх патриочĕсем — Кузьма Минин тата Димитрий Пожарский пулнă.

1611 çулти сентябрь уйăхĕнче Минин Н.-Новгородра çĕршыва хăтарма чĕнекен хĕрÿллĕ сăмах тухса каланă. «Тăван çĕршыва хăтарассишĕн пурлăхсене те, хамăр арăмсене те, ачасене те хĕрхенмĕпĕр», тенĕ вăл хăйĕн сăмахĕнче. Унăн çулăмлă сăмахĕ пĕтĕм халăх чĕрине çулăмлантарса янă. Хулари посад çыннисен земски пухăвĕнче тухса, Минин пысăк çар ушкăнĕ тумашкăн укçа-тенкĕ тата япаласем пуçтарма чĕннĕ, ку ĕçе пуçласа яма вăл çавăнтах хăйĕн пурлăхне пырса панă. XVII-мĕш ĕмĕрти писатель çырса хăварнă тăрăх, Минин «килĕнчи япаласенчен хăйне валли кăштах хăварса, пĕтĕм пурлăхне çар пухас ĕçе панă».

Н.-Новгородри посад çыннисем (сутуилÿçĕсем, купецсем) Минина пурте лайăх пĕлсе тăнă, ăна хисепленĕ. Вăл хăй пуян таврашĕнчен пулман, анчах та аслă çын пулнă. Аслă тата тÿрĕ кăмăллă çын пулнă пирки халăх ăна шаннă, çакна пула темиçе хутчен те земски старостăна суйланă. Хăшпĕрисем çырса хăварнă тăрăх, Мининăн сутă-илÿ юлташлăхĕнче çÿрекен укçи мĕн пурĕ те 300 тенкĕ таран кăна шутланнă.

Минин, хăй пуçарса янă ĕç питех те пысăк ĕç иккенне шута илсе, нижегородецсен земски пухăвне «приговор» йышăнма сĕннĕ. Çав приговорта çапла каласа çырнă: «Ополченецсен çарне иксĕлми çирĕп никĕс çинче тумалла... Ополченецсен чăнлăхшăн тăмалла, шухăша улăштарма юрамасть, начальниксене пур тĕлĕшрен те итлемелле, пăхăнмалла тата вĕсемпе нимĕн енчен те хирĕçмелле мар; çар çыннисене шалу укçи парса тăмалла...» Çакăнтан Кузьма Минин ополченецсен çарне çавтери çирĕп йĕркепе тума тăрăшни курăнать.

Минин патне пĕтĕм хула çыннисем хăшĕ укçа-тенкĕ, хăшĕ хаклă япаласем тата ытти пурлăхсене те пыра-пыра панă. Пуриншĕн те Минин вĕсен хăйсен чĕрисене ыраттарса тăракан шухăша каласа панă пекех туйăннă. Çавăнпа ăна пурте ополченецсен çарне пухма хапăлласах пулăшнă. Çав вăхăтрах хулара хĕçпăшал тавраш̆ĕ хатĕрлес ĕç пуçланса кайнă: хăшĕ тупăсем, хăшĕ сăнăсем, хĕççем тунă, хăшĕ пăшал туса хатĕрленĕ.

Халăхран пухăнакан ополченецсен çарĕ валли шанчăклă çарпуçлăхĕ (военачальник) кирлĕ пулнă. Çав çарпуçлăхĕ «хăйĕн ĕçĕсене лайăх пĕлтĕр тата вăл тăшмансен енне куçакан çын ан пултăр» тенĕ Кузьма Минин. Ун пек çарпуçлăхĕ тума Минин хăй енчен Димитрий Пожарский князе чĕнме шутланă. Пурте Минин сĕнĕвĕпе килĕшнĕ.

Пĕтĕм çĕршыв юхăнса çитнĕ вăхăтра, государство тытăмĕ хавшанипе унталла та кунталла сулкаланнă хушăра, нумай князьсемпе боярсем харпăр хăй пурлăхне сыхлас тесе кирек кама сутăнма та хатĕрех пулнă. Анчах та Димитрий Пожарский ун пек çын пулман. Вăл, Минин пекех, тăван çĕршывшăн чунне парса кĕрешме хатĕр тăнă, вăл хĕрÿллĕ патриот пулнă. Вăл, унччен те çапăçусенче пулса, хăйĕн тĕрĕслĕхне тата тÿрĕ кăмăлне палăртнă. II-мĕш Лжедимитрий çарĕсене хирĕç çапăçнă чухне урарăн аманнăскер, Д. Пожарский ку вăхăтра Н.-Новгородран 120 çухрăмра, хăй имĕнийĕнче пурăннă. Н.-Новгород халăхĕ чĕнсе янипе вăл хавасланса килĕшнĕ.

Çапла вара Мининпа Пожарский Нижний Новгород ополченецĕсен çарĕ пуçне тăнă. Минин хăй çине çархалăхне хуçалăх енĕпе пăхса тăрас ĕçсене илнĕ, Пожарский — вăрçă ĕçĕсене ертсе пырассине йышăннă.

Н.-Новгородри ополченецсен çарне туни çинчен пĕлсен, унта çавăн пек ополченецсемех инçетри Смоленск, Дорогобуж, Вязьма хулисенчен те пырса хутшăннă. Вĕсен отрядĕнче 2 пин çын ытла пулнă.

Н.-Новгородри ополченецсен çарне пĕр Н.-Новгород çыннисем çеç мар, Атăл тăрăхĕнчи ытти хуласемпе ялсенчи çынсем те тата чăвашсем, тутарсем, мордвасем, марисем те пулнă. Çак халăхсем те вырăссемпе пĕрле Мускава интервентсенчен хăтармалли похода хутшăннă.

1611 çулăн март уйăхĕнчех Улатăр, Шупашкар, Сĕве, Хусан хулисенче те чĕнсе калакан грамотăсем илнĕ пулнă. Çав çулти октябрьте Мининпа Пожарский янă грамотăсене Арзамасра, Улатăрта, Кăрмăшра, Етĕрнере, Шупашкарта, Хусанта илсе вуланă. Грамотăра Н.-Новгорода çынсем пухса яма чĕннĕ. Н.-Новгородран илнĕ грамота çине ответлесе, Хусантан: «Мускавшăн тата Хусан государствишĕн пурте пĕр канашлăн пĕрле тăрас, пĕр-пĕрне усал тăвас мар тесе, Хусан государствинчи пур йышши çынсем — князьсем те, мăрсасем те, тутарсем те, чăвашсем те, черемиссем те... пурте пĕрле Нижний Новгорода пыраççĕ...» тесе çырнă (Собрание государственных грамот и договоров, ч. II, № 269, стр. 568—569).

Çапла ĕнтĕ, документсем кăтартса панă тăрăх, 1611—12 çулсенче Мускава хăтарнă çĕре Н.-Новгород ополченийĕсемпе пĕрле чăвашсем те хутшăнни курăнать.

Д. Пожарский ыра кăмăллă, тÿрĕ полководец пулнă, çавăнпа ăна ополченецсем юратнă.

Н.-Новгородра пуçтарăннă ополченецсен çарĕ малтан Кинешмăпа тата Кострома урлă Ярославль хулине пынă. Унта вăл 4 уйăха яхăн тăнă. Çак вăхăтра кирлĕ вăйсене пухса çитернĕ. Ярославльре «Пĕтĕм çĕршыв Совечĕ» текен власть центрĕ туса хунă. Çак власть тăрăшнипе Атăл тăрăхĕнчи, Уралри тата Çурçĕр енчи облаçсенчен çителĕклĕ укçа-тенкĕ, хĕçпăшал, ĕçме-çимелли тата войскăсем пухса çитернĕ. Ярославльренех ополченецсен пĕр отрядне шведсене хирĕç Белозеро енне янă. Ку отрядăн шведсенчен Тихвин, Новгород, Старая Русса, Торопец хулисене туртса илмелле пулнă.

К. Мининпа Д. Пожарский ертсе пыракан ополченецсен вăйлă çарĕ 1612 çулти август уйăхĕнче Мускав патне пырса çитнĕ. Мускав патнелле пынă чухне вĕсен пĕрмаях интервентсен войскисене хирĕç çапăçса пымалла пулнă. Сентябрьпе октябрь уйăхĕсенче Мускав таврашĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Мускав хĕррисенче парăннă интервентсем Кремле кĕрсе хупăннă. Д. Пожарский, Кремле йĕритавраха çавăрса илсе, интервентсем пулăшу илсе тăракан çулсене татнă.

Ополченецсем октябрĕн 22-мĕшĕнче штурмпа Китай-города йышăнса илнĕ. Çакăн хыççăн интервентсен Кремльри темиçе пин çынлă гарнизонĕ выçă аптăранипе хăй парăнни çинчен пĕлтернĕ. Çапла вара 1612 çулти октябрĕн 26-мĕшĕнче вырăссем Кремле интервентсенчен тасатнă.

XVII-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче ютçĕршыв захватчикĕсем вырăс çĕршывне тытса илме хапсăнни çакăн пек пĕтсе ларнă. Вырăс халăхĕ, хăйĕн талантлă патриочĕсем К. Мининпа Д. Пожарский ертсе пынипе, интервентсене хыттăн аркатса тăван çĕрĕнчен хăваласа янă. Çапла аслă патриотизмпа çĕкленнĕ халăх тăшмансăн лайăх хĕçпăшалланнă пысăк вăйне те тĕппипех çĕмĕрсе тăкса, мирлă пурнăç хума пултарнă.

Пирĕн совет халăхĕ, вырăс халăхĕн авалхи геройла традицийĕсемпе пурăнакан халăх, хальхи вăхăтра хамăр çĕршыва çĕмĕрсе кĕнĕ нимĕç захватчикĕсене те çавăн пекех çапса аркатать.

П. ГРИГОРЬЕВ.

Тасалăхпа йĕркелĕхшĕн большевикла кĕрешмелле

Шупашкар хула совечĕн Сессийĕ

Февралĕн 27-мĕшĕнче Шупашкар хула Совечĕн черетлĕ XIV-мĕш Сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси хулана тасалăхра тытса тăрасси тата халăха чир-чĕртен упрасси çинчен сӳтсе яврĕ. Ку ыйтупа Сесси хула Совет исполком председателĕн Золотников юлташăн докладне итлерĕ.

Вăрçа пула фронт сывăхĕнчи районсенчи, облаçсенчи ĕçсыннисен, хăйсен килĕсене хăварса, вăхăтлăха тыла куçмалла пулчĕ. Фронта нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçма çар ĕçне вĕренсе хатĕрленнĕ резервсем кайсах тăраççĕ. Чугунçул станцийĕсенче, хуласемпе ялсенче çынсен йышĕ нумайланчĕ, пирĕн хваттерсенче кăшт хĕсĕнерех пурăнма тиврĕ, общественăллă вырăнсем те тăвăрланчĕç.

Çакăн пек обстановкăра хула хушшинче, пурăнмалли çуртсенче, предприятисемпе учрежденисенче, урамсенче тата килхушшисенче тасалăха, йĕркелĕхе тивĕçлипе тытса тăрасси халĕ пирĕн умра тăракан пысăк задача пулса тăрать. Тасалăхшăн кĕрешни — фронта пулăшни пулать. Тасалăха çирĕп упрани — халăхăн сывлăхне сыхлани пулать. Çакна ĕçсыннийĕн, ĕçхĕрарăмĕн, килхуçи хĕрарăмĕсен таранăн ăнланса илмелле.

Сесси çак ĕç хулара мĕнле пынине тишкĕрсе тухрĕ. Докладчик та, тухса калакан депутатсем те тасалăх ыйтăвĕ хулара пурнăçа начар кĕрсе пынине палăртрĕç, тасалăхпа йĕркелĕхе пăсакан, уншăн тăрăшман предприятисемпе учрежденисен, хуçалăх организацисен руководителĕсене критиклерĕç. Çак ыйту çине хула Совечĕн исполкомĕ те, унăн отделĕсем те ку таранччен тивĕçлипе çаврăнса пăхманнине палăртрĕç.

Хăйĕн докладĕнче Золотников юлташ хулан коммунальнăй управленийĕн руководителĕ Астин, пурăнмалли çуртсен Управленийĕн руководителĕ Гаврилова, Полиграфи промышленность Управленийĕн начальникĕ Мощицкий, чугунçул станцийĕн начальникĕ Калоев, столовăйсен трестĕн директорĕ Масленников, çăкăр пĕçерекен комбинат директорĕ Никулин хăйсен предприятийĕсемпе учрежденийĕсенче, хулари общественăллă вырăнсенче тата çуртсемпе килхушшисенче тасалăх тăвассишĕн питех те начар ĕçленине кăтартса пачĕ.

Полиграфи промышленность Управленийĕн начальникĕн сӳрĕклĕхне пула культурăллă çурт пылчăкпа тусан тата тасамарлăх айне шулнă. Пысăк çуртра канализаци ĕçлемест, сивĕ, тула тухмалли вырăнсем тасамарлăхпа тулса ларнă, пăрнă, пылчăк тулли. Кăна уйрăмах типографин переплетнăй цехĕнче тата рабочисен общежитийĕсенче курма пулать. Кунта тасамарлăхпа пурăнса ăна асăрхама тă- [illegible]

[illegible] Юлашки вăхăтра мунча хăйĕн ĕçне кăшт лайăхлатрĕ темелле. Анчах унăн ĕçĕнче халĕ те çитменлĕхсем нумай-ха. Цветков юлташ мунча пĕр чарăнусăр лайăх ĕçлетĕр тесе çителĕклĕ тăрăшса ĕçлемест, час-часах унта е вутă çук, е шыв çук, хывăнса тумланмалли пӳлĕмсенче таса мар, çавăнпа çĕрте те кирлĕ тасалăх çук, ĕçлекенсем хăш чухне халăхпа харкашаççĕ.

Хуларан столовăйсенче, магазинсенче те тасамарлăха пĕтермен. Ĕçлекенсен тумтирĕсем хура, сĕтел çинчи çивиттисем таса мар, чӳрече шăтăклисем тусанланнă, урайсем пылчăклă, тусанлă. Çăкăр пĕçерекен комбинатра та халех тасалăха туса хумалла. Макарон тăвакан фабрикăра та, колбаса тăвакан мастерскойра та тасалăх çителĕклĕ мар.

Нумай урамсенче, килхушшисенче тасамар шывсем, çӳп-çап пăрахмалли шăтăксем çук, тула тухмалли вырăнсем тулса ларнă.

Çак тасамарлăхран хулана халех тасатасси çинчен, ку енĕпе тумалли ĕçсем çинчен Сессире нумай депутатсем тухса каларĕç. Хулара тасалăх, йĕркелĕх тăвассишĕн кашни депутатăн ĕçлеме кирлине палăртрĕç, тасалăх, йĕркелĕх тăвас тĕлĕшпе хăйсен округĕсенчи суйлавçăсемпе ĕçлеме кирлине кăтартрĕç, çак ĕçе тума хулан пĕтĕм халăхне çĕклеме, уйрăмах хĕрарăм-активистсене анлăн хутшăнтарма кирлине палăртрĕç.

Халăха чир-чĕртен сыхлас, тасалăха вĕрентес, хăнăхтарас ĕç — медицина работникĕсен чыслă ĕçĕ. Çак ĕçе вĕсен пуçарса пымалла, вĕрентмелле, ыйтмалла. Шупашкар хулинчи медицина работникĕсем ку тĕлĕшпе питĕ те кирлĕ пуçарусем тунине кăтартма тивĕç.

Сессире ача-пăча поликлиникин директорĕ Засыпкина юлташ сăмах каларĕ. Вăл депутатсене ача-пăча поликлиники халăх хушшинчи тасалăхпа мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕ. Поликлиника коллективĕ хăйĕн çуртĕ ăшĕнче те, таврашĕнче те тасалăх туса хунă. Поликлиникăна кĕрсен, кашни çынах кунта тасалăха çирĕп тытнине курать. Поликлиника коллективĕ хăйĕн ĕçне хулари халăх хушшинче те анлăн туса пырать. Вĕсем хулан 17 урамĕсенчи çуртсенче тасалăха, йĕркелĕхе сăнаса тăраççĕ, уншăн кĕрешеççĕ. Килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче час-часах лекцисем, калаçусем туса ирттереççĕ. Çапла ĕçленипе поликлиника коллективĕ тавра хула тасалăхĕшĕн кĕрешекен хĕрарăмсен активĕ пĕтĕçнĕ. Вĕсен шучĕ кунран кун ӳссе пырать, халĕ 65 хĕрарăм халăх пурăнакан çуртсенче, урамсенче, килхушшисенче тасалăх кӳрессишĕн хастарлăн ĕçлеççĕ.

Ача-пăча поликлиникин коллективĕн ĕçĕ ыттисемшĕн пример пулса тăрать. Сануполномоченнăйсен, госсанинспекцин, хула санинспекцийĕн тата милицин хулара тасалăх тăвассишĕн тивĕçлипе [illegible] И. Н. Петров [illegible] О. И. Ковалева [illegible] К. А. Арамасцева депутата суйларĕ.

Вăрман хатĕрлес плана мартăн 15-мĕш тĕлне тултарар

Вăрман хатĕрлевĕн планне тултарнă колхозсем

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ. (Телефонпа). [illegible]

М. Т.

Вăрман хатĕрлеме васкаман çĕрте

ÇĔРПУ (Хамăр корр.). [illegible]

Г. ПЕТРОВ.

Англи парламентĕнчи пренисем

ЛОНДОН, февралĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче пулнă пренисенче Инди çинчен нумай каласнă. Национал-либерал Шустер Индие вăрçă вăхătĕнче пĕтĕмĕшлĕ хăрушлăха хирĕç кĕрешме пĕрлештерни уйрăмăнах кирлĕ пулнине палăртнă. Индие доминион статутне пама пулнипе кăна Англия Инди ыйтăвне татаймасть, — тенĕ Шустер. — Вăрçă пынă вăхăта валли Индире нацилĕ вăйлă правительство тăвас пулать тата Индие Англия ирĕклĕх пама шухăшласа хунине ĕнентермелле. Шустер Индире пысăк мар çар кабинечĕ тума сĕннĕ, вăл кабинета вице-король тата портфельсĕр министрсем кĕмелле, çаксене вара вăрçа пĕтĕмĕшле ертсе пырас ĕçе хушмалла, анчах та министерствăсем Исполнительнăй Совет умĕнче ответлă пулса тăнине çаплипех хăвармалла. Çавăн пек кабинета политикăллă партисен тĕп лидерĕсем кĕрĕç тесе шанма пулать, çапла туни вăл вăрçă ĕçĕсенче англичансене, мусульмансене тата индуссене пĕрле килĕштерсе ĕçлеме май панă пулĕччĕ, тенĕ Шустер.

Либерал Перси Гардис хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: «Айтăр-ха эпир Индири ĕçсене унта ăнăçусем ытла та кая юлса турăмăр тесе каламалла ан пултăр тесе тăвар».

Общинăсен палатинчи пренисенче вăрçăллă лару-тăру çинчен Хор-Белиша сăмах тухса каланă, вăл — правительство составĕнче пулнă улшăнусем тата Криппса çар кабинечĕн составне кĕртни пурне те кăмăла кайнă, тесе каланă. Вăрçă мĕнле пулса пыни çинчен калаçа, Хор-Белиша çакна палăртнă: Англин ĕçĕсем Малайăра ăнса пыманни тата Сингапура çухатни вăрçăри сăлтавсенчен çеç килмен, вĕсем тата колонири влаçсем вырăнти халăхпа пĕрле килĕштерсе ĕçлеме пултарайманнинчен те килнĕ, ку вăл Бирмăра та палăрать. Анчах Инди халăхĕпе пĕрле килĕштерсе ĕçлеме тытăнмалăх вăхăт пур-ха, — тенĕ Хор-Белиша. Правительство Чан Кай-ши шухăшĕсем пирки хăйĕн сăмахне часах каласа парĕ, тесе шанса каланă вăл. Чан Кай-ши çапла шутлать: Индие халиччен сĕнӳсенчен нумай хăюллăрах та усăмлăрах сĕнӳсем парса, ăна вăрçă ĕçне хутшăнтарма пулать, тет. Ăнăçсăрлăхсен вăрçăри сăлтавĕсем çинчен Хор-Белиша çапла каланă: çав сăлтавсем вĕсем çаксем пулнă: противника çителĕклĕ хакламанни, хамăр вăя ӳстерсе ытлашши пысăк хак пани тата хĕçпăшаллă вăйсене сывлăшран çителĕклĕ таран пулăшса пыманни пулнă, тенĕ.

Инди çинчен лордсен палатинче те сӳтсе явнă. Либерал Озмюэль çапла каланă: Индие атакăлама пултарĕç, çав пулма пултаракан атакăсене Индин хăйĕн çынсемпе материалсем тĕлĕшпе питех те пысăк ресурсем пуррине пула кăна сирсе пăрахма пулать, тенĕ. Индин çарне ӳстерес тата хĕçпăшаллантарас енĕпе халиччен палăртса хунă ĕçсенчен нумай ытларах тумалла пулать, тенĕ вăл. Инди ыйтăвне пĕтĕмĕшпе тĕрĕс пăхса тухсан, Инди халăхĕн хавхаланăвĕ Кăнтăр Азири мĕнпур лару-тăрăва пĕр çул е икĕ çул хушшинче тĕпренех улăштарса хума пултарать, тенĕ Оэмюэль.

Англири авиаци завочĕсенчи рабочисене чĕнсе калани

ЛОНДОН, февралĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, авиаци промышленноçĕн çĕнĕ министрĕ Ллевелин авиаци завочĕсенчи рабочисем патне послани янă. Çав посланире вăл çапла каланă: Гитлер Англие çĕнтерсе тăкас тесе иккĕмĕш çапăçу пуçласа яма кирек хăш самантра та тытăнса тăрас çук. Иккĕмĕш çапăçу, тен, малтанхинчен те вăйларах пулĕ. Эпир противникăн чĕрине Англирен мĕнпе персе шăтарма пултаратпăр? Пирĕн алăра пĕр-тен-пĕр средство — вăл ытларах та ытларах бомбардировщиксем, ытларах бомбăсем туса кăларасси пулать. Эпир туса пама пултаракан кашни самолет пирĕн вырăс союзниксем патне вăхăтра çиттĕр, эпир туса пама пултаракан кашни самолет вĕсене хăйсен чаплă çĕнтерĕвĕсене ăнăçлăн вĕçлеме пулăштăр. Голланди Индийĕ, Австралия, Çĕнĕ Зеланди, Индия, Бирма—хăйсен умне тухса тăнă хăрушлă сехетре пирĕн заводсенчен ытларах та ытларах продукци ыйтаççĕ,—тенĕ çав посланире.

Чан Кай-шипе Индин вице-королĕ пĕр-пĕрин патне посланисем янă

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, генералиссимус Чан Кай-ши Индирен тухса каяс умĕн пĕр кун маларах Индин вице-королĕ патне послани янă. Хăйĕн посланийĕнче Чан Кай-ши Китайпа Инди хушшинче вăрçă ĕçĕсене пĕрле туса пырас тĕлĕшпе калаçса татăлнăшăн кăмăл тунине кăтартса панă. Çакă ĕнтĕ Лăпкă океанра пĕрлĕхлĕ çĕнтерӳн никĕсне хуни пулса тăрать. Çакă ĕнтĕ нумаях та пулмасть Сингапура çухатнăшăн тивĕçлипех тавăрать, тесе палăртнă посланире.

Чан Кай-шин посланийĕ çине панă ответра вице-король çапла каланă: кунта, Индире, эпир Эсир парса хăварнă лайăх канашсене шута илсе кĕрешĕпĕр. Кĕрешӳ тĕлĕшĕпе Китайăн опычĕ питех те пысăк. Эпир Китай халăхĕпе тата Китайăн паттăр çарĕпе пĕрлешсе противника хирĕç кĕрешĕпĕр.

Японин подводнăй лодки Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çыранĕсене тапăнни пирки

ВАШИНГТОН, февралĕн 26-мĕш (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес Японин подводнăй лодки Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çыранĕсене тапăнса тупăсенчен пени çинчен çапла ăнлантарса панă: японецсем хăйсен противникĕсене ĕмĕрех çавăн пек хăтланса хăратма тăрăшаççĕ. Çакна та японецсем юриех Рузвельт радио тăрăх тухса калас умĕн тунă. Уэллес çакна çирĕппĕн астутарнă: ун пек хăтланса американецсене хăратаймăн, тенĕ.

Юнайтед пресс агентстви çакна асăрхаттарать: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен материкне çапла тапăнни 1918-мĕш çултанпа пулман, унтанпа ку—пĕррремĕш тĕслĕх. 1918-мĕш çулта нимĕçсен подводнăй лодки Массачузете штатĕнчи Код сăмсаха тапăнса пенĕ пулнă.

Гитлеровецсем тыткăна лекнĕ красноармеецсенчен тискеррĕн мăшкăлласçĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Америкăри «Лайф» ятлă журнал Польшăран илсе пынă фотографи ӳкерчĕкĕсене пичетлесе кăларнă. Çав фотоӳкерчĕксем тыткăнра вĕлернĕ красноармеецсене тата вырăс вилнисене кăтартса параççĕ. Фотографи ӳкерчĕкĕсем айне: кусем Хĕвелтухăç Европăри Германи çарĕ тытакан яланхи политикăн пĕчĕк пайне çеç кăтартакан картинăсем, тесе çырнă.

Иртнĕ çулти сентябрь уйăхĕнче Германи çарĕн верховнăй командованийĕ тата продовольстви министерстви тыткăнри вырăссене мĕнле тытса усрасси çинчен уйрăм приказсем панă. Çав приказсем тăрăх, тыткăнри вырăс çар çыннисен нимĕнле «правăсем» те çук, çавăнпа та вĕсене йĕркеллĕн тытса усрама кирлĕ мар. Каярахпа Германи çарĕн верховнăй командованийĕ тыткăнри вырăссене епле тытса усрас тĕлĕшпе ятарласах 3658-мĕш №-лĕ приказ кăларнă. Ку приказ герьсенчи тата ĕçри охранăна тыткăнри вырăс çар çыннисене тарма тăнăшăн çеç мар, приказсене хăвăрт итлеменшĕн те персе пăрахма хушать. Çакăн хыççăнах Германи охрани тыткăнри вырăс çар çыннисене 1-шар тата 6-шар çыннăн тăратнă ретсемпе стройпа çӳретмелли йĕрке тăвать. Çакăн пек стройпа пырассине кăшт пăсни те вырăс çар çыннисене персе вĕлермелли сăлтав пулса тăрать. Фотографи ӳкерчĕкĕсенчен пĕринче тыткăнри красноармееца çавăн пек сăлтавшăн персе пăрахнине кăтартнă. Ыйвăр пурнăçпа аптăраса çитнĕ тыткăнри çын тарма хăтланнă, анчах та тарса хăтăлайман, ăна лагерь тавра тытнă йĕплĕ пралук карта çине çакса вĕлернĕ. Ытти фото-ӳкерчĕксенче тыткăнри çар çыннисене мĕн ĕçлеттернине кăтартса панă; гитлеровецсем вĕсен пур ăшă тумтирĕсене те хывса илнĕ.

Гитлеровецсен тискер кайăкла тепĕр ĕçĕ

ЖЕНЕВА, февралĕн 25-мĕш. (ТАСС). Хура тинĕс çинче нимĕçсем Болгарин «Струма» ятлă пароходне путарнă. Çав пароход çинче Румыни влаçĕсен террорĕнчен тарса тухса Палестинăна кайма шутланă 750 еврей пулнă. Çав беженецсенчен вĕсем пароход çине ларма ĕлкĕричченех Румыни влаçĕсемпе нимĕçсем тискеррĕн мăшкăлланă. Пароход çине ларнă чухне вĕсене апат-çимĕç те паман, пароход çинче вĕсен санитари тĕлĕшĕнчен чи япăх условисем пулнă. Çавăнпа та çула тухсан малтанхи кунсем хушшинчех темиçе çын вилнĕ. Юлашкинчен, нимĕçсем усçăнах ирсĕррĕн çапла пĕлтернĕ: «Струма» парохода «паллă мар çĕршывăн çар карапĕ» путарнă, пароходпа пĕрлех пур пассажирсем те путнă, тенĕ.

Англипе Америка хушшинче тунă килĕшӳ

ВАШИНГТОН, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Шурă çуртран пĕлтернĕ тăрăх, Англин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи посолĕ Галифакс тата государственнăй секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ Уэллес ĕнер Англипе Америка пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăнхи экономика тĕлĕшĕнчен сывăх вăхăтсенче калаçусем пуçласа яма хатĕрленесси çинчен килĕшӳ тунă. Шурă çуртăн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Ĕнер государственнăй секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ тата Англин посолĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи хушшинче вăрçă вăхăтĕнче пĕр-пĕрне пулăшассин принципĕсемпе усă курасси çинчен килĕшӳ тунă. Çак килĕшӳ 1941 çулти мартăн 11-мĕшĕнче хĕçпăшала тара е кивçен парасси çинчен йышăннă закон çинче никĕсленсе тăрать. Çак закона пула, çавнашкалах тата ăна пурнăçа кĕртме нумай укçа-тенкĕ панине пула Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем пирĕн хамăрăн çĕршыв оборонишĕн усăллă пулма пултаракан кирек епле çĕршыва та хĕçпăшал, снаряжени тата продовольстви çителĕклĕ тăратма пултараççĕ. 1941 çулти декабрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çине тапăнчĕç. Хальхи вăхăтра эпир пĕрлешнĕ 26 çĕршывран пĕри пулса тăратпăр. Çак çĕршывсем хăйсен пĕрлештернĕ мĕнпур вăйне тăшмана çĕнтерес тата тĕрĕс те çирĕп мир тăвас ĕç çине хунă.

Пирĕн çавтери пысăк ресурсем пирĕнпе туслă çĕршывсен хĕçпăшал çителĕклĕ тăратма пултараççĕ. 1941 çулти Пирĕн пĕрлештернĕ производство вăйхăвачĕсемпе ресурсем тăтăшах ӳссе пырĕç, эпир çĕнтерӳ тăвиччĕнех пĕрле çапăçăпăр. Юлашки вăхăтра пулса иртнĕ вăрçă ĕçĕсем çакна кăтартса пачĕç: хĕçпăшала кивçен е тара памалли законпа усă курса пĕрлешнĕ çĕршывсене хĕçпăшал пани питĕ пысăк усă пачĕ. Боевой фронтсен ӳссе пыракан ыйтăвĕсене туллирех те туллирех татса парас тесе, çак политикăна ытларах та ытларах пурнăçа кĕртсе пымалла. Ĕнер алă пусса çирĕплетнĕ килĕшӳ ĕнтĕ эпир Англие пулăшу парас тĕллеве вĕçĕмренех тытса пынине татах та тепĕр хут кăтартса парать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Англи правительстви те хăйĕн вăйĕ çитнĕ таран Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене пулăшу парĕ. Çак икĕ çĕршыв хушшинчи тӳлевсем тĕлĕшпе илсен, килĕшӳре каланă тăрăх, хальхи кĕрешӳ вăхăтĕнче çав тӳлевсене мĕнле йĕркелемеллине тĕплĕнех кăтартса пама çук-ха.

Ун вырăнне килĕшӳре хăшпĕр тĕп принципсене кăтартса панă. Çав принципсем çавтери анлă тата пĕр-пĕрне пулăшасси çавтери пысăк пирки, тӳлевсем çине çиелтен çеç пăхни пирĕн халăхăн экономикишĕн те, çавнашкалах Англи халăхĕн экономикишĕн те питĕ йывăр пулнă пулĕччĕ. Хĕçпăшала кивçен е тара памали закон тăрăх тара панă япаласене вăрçă хыççăн пире таврса парĕç. Вара пĕр-пĕрне пулăшнин итогне тăвăпăр.

Килĕшӳн 7-мĕш статьинче экономика енĕпе юлашкинчи тӳлевсем мĕнле пулмаллин тĕп паллăлăхĕсене кăтартса панă. Пĕр пек шухăшлакан пур çĕршывсем те, килĕшӳсем туса, тӳлевсен çакăн пек йĕркипе килĕшме пултараççĕ. Çак килĕшӳн тĕп тĕллевĕ тĕнчери экономикăллă отношенисене лайăхлатасси пулса тăрать.

Çак тĕллевсене производствăна ӳстерес, рабочисене тухăçлăрах ĕçлемелле тăвас тата таварсене улăштарас, тыткалас тĕлĕшпе уйрăм çĕршывсенче те тата пĕтĕм тĕнчипе те тивĕçлĕ мероприятисем йышăннипе пурнăçа кĕртсе пымалла. Çакă ĕнтĕ, килĕшӳре каланă тăрăх, мĕнпур халăхсен ырă пурнăçĕн материальнăй никĕсĕ, çавнашкалах тата пĕтĕм тĕнчери суту-илӳри юрăхсăр нормăсен практикине пĕтермелли, тарифсене чакармалли, суту-илӳри ытти чăрмавсене те, кĕскенрех каласан, Атлантика хартийĕнче экономика тĕлĕшĕнчен кăтартса панă тĕллевсене пурнăçа кĕртмелли база пулса тăрать. Çак тĕллеве пурнăçа кĕртес тесе, килĕшӳн 7-мĕш пунктĕнче çакăн пек мероприятисем тума палăртнă: килĕшӳре палăртнă схема тăрăх, вăрçă хыççăн анлă производство системине тума, пирĕн çĕршывна Британи империйĕнчи халăхсем валли, çавнашкалах çак аслă ĕçе хутшăннă ытти çĕршывсен халăхĕсем валли те, çителĕклĕ тавар туса кăларма май паракан базăсене шута илсе, çитес çывăх вăхăтсенчех калаçу пуçласа ямалла».

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерствин коммюникинче çапла пĕлтернĕ: Америкăпа Филиппин войскисем Японин Батан çурутрав çинчи (Филиппин) фронтăн мĕнпур линийĕ тăрăхĕнчи позицийĕсене атакăланă. Çавăн пек атака туса, Америкăпа Филиппин войскисем темиçе километр малалла кайнă, Японин малти позицийĕсене йышăнса илнĕ.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Англин Рангунри (Бирма) командованийĕн коммюникинче çапла каланă: февралĕн 26-мĕшĕнче Рангун тĕлĕнче пулса иртнĕ сывлăшри çапăçура Японин 21 самолетне персе антарнă. Фронтăн кăнтăр участокĕнче Ситтанг юханшывĕн районĕнче çапăçусем пулман. Çавăн пекех фронтăн çурçĕрти участокĕнче те пысăк операцисемех пулса иртмен. Австралин командованийĕн коммюникинче çапла кăтартса панă: Австрали бомбардировщикĕсем Рабул портне (Çĕнĕ Британи утравĕ) тата Японин чылай сооруженийĕсене çĕнĕрен атакăланă. Аэродром çине бомбăсем пăрахса, самолетсем лармалли çула тата аэродром çинчи çуртăрсене ишĕлтернĕ, çакăнтах пушар тухнă. Австралин пур самолечĕсем те хăйсен базине пĕр сиенленмесĕр таврăннă.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

БАТАВИЯ, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çакна кăтартса панă: ĕнер Голланди Индийĕн бомбардировщикĕсем противникăн Палембанг (Суматра утравĕ) сывăхĕнчи çар объекчĕсене атакăланă. Çакăнта бомбăсем пăрахнипе темиçе пушар тухнă. Операцире пулнă пур самолетсем те хăйсен базине таврăннă.

Бомбардировщиксен тепĕр соединенийĕ Японин Банка утравĕ çывăхĕнчи (Суматрăран хĕвелтухăç еннерех) пухăнса тăракан суднисем çине вĕçсе пырса тапăннă, бомбăсем пăрахнин результачĕсене палăртма май килмен.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Официальнăй сведенисем тăрăх, Японин Суматра утравĕ çинче кĕрешекен войскисем, Палембанг районĕнчен хĕвеланăçнелле куçса пырса, февралĕн 24-мĕшĕнче Суматра утравĕн хĕвеланăç çыранĕ çинче ларакан Бенкулен хули патне çитнĕ.

Англи авиацийĕ Киль хули çине пырса тапăнни

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: февралĕн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Киль хули çине тепĕр хут пырса тапăннă. Бомбăсем тĕл ӳкнине пула хулари доксемпе верфьсенче пушарсем тухнă. Англин виçĕ самолечĕ хăйсен базине таврăнман.

—⊙—

Апат-çимĕç продукчĕсене салатса пĕтернĕшĕн уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ

ВЦСПС Октябрьски чугунçул çинче ĕçлекен рабочисем валли уçнă 1-мĕш №-лĕ столовăйăн ĕçне тĕрĕслесе, кунта питĕ пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртнă. Çав столовăйра норма тăрăх паракан продуктсене шутсăр-мĕнсĕр расходласа тăкакланă. Январь уйăхĕнче пĕр декада хушшинче 1.000 килограма яхăн çĕрулми ытлашши пĕтернĕ. Столовăйра Октябрьски чугунçул çинче ĕçлемен çынсене те кил-апат парса янă. Час-часах тата пĕрисене иккĕмĕш блюдăна 2—3-шер е ытларах порци панă, çав вăхăтрах теприсем пĕрремĕш блюда çеç илнĕ, е пачах апатсăр тăрса юлнă. Столовăйĕнче ĕçлекенсен дисциплини начар пулнă, столовăйра апатланакансемпе вĕсем хыттăн калаçнă.

Столовăйĕнче юрăхсăр, усламçăлла меслетсемпе усă курнă, сăмахран, пĕрремĕш блюда çине шыв хушса апатăн тутипе пахалăхне пăснă.

Çак çитменлĕхсем пурте столовăй директорĕ Шуваев хăйĕн ĕçĕсене преступникла, тăрăшмасăр туса пынă пирки тата местком апатланассине организацилес ĕçри çитменлĕхсемпе килĕшнĕ пирки, хăйĕн ĕçĕсене туса пыман пирки пулнă, тесе йышăннă ВЦСПС.

ВЦСПС райтрансторгпита столовăй директорне Шуваева ĕçрен кăларма хушнă. Столовăйри местком председательне Владимирова ĕçрен хăтарнă.

Продуктсене ытлашши расходланине тата салатса пĕтернине тĕрĕслеме, çак ĕçшĕн айăплисене уголовнăй йĕркепе ответ тыттарма ВЦСПС ку ĕçе Мускав хулинчи Железнодорожнăй район прокурорне панă.

Сталинскри чугунçул мастерскойĕнчи, вагон хуçалăхĕнчи тата Октябрьски чугунçул службин 1-мĕш дистанцинчи месткомĕсене столовăй ĕçне тĕрĕслесе пымашкăн 5 кун хушшинче массăллă контроль организацилеме хушнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 608

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: л: